ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Январь 27
ЫТЛАРИКУН
№ 18 (8927)
35-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
Выранти Советсен суйлавĕ умĕн: Шупашкарти ĕçсыннисен кандидачĕсем. П. Скворцов.—Çак кунсенче (1 стр.).
КПСС ЧĂВАШ ОБКОМĔН III-МĔШ ПЛЕНУМĔ: Ĕçсынни депутачĕсен выранти Совечĕсен суйлавĕ тата парти организацийĕсен задачисем (2 стр.).
ТЕХНИКĂЛЛА КУЛЬТУРАСЕМ АКСА ТĂВАС ĔÇЕ ЛАЙĂХЛАТСА ПЫРАССИШĔН КĔРЕШĔР! Г. Стрельников.—Техникăллă культурăсем акса тăвас ĕçе вăйлатмалла (3 стр.).
Г. Спиридонов.—Ревизи комиссийĕсен ĕçне лайăхлатмалла (3 стр.).
П. Фролов. Тĕнчери лару-тăру (4 стр.).
Монголи халăхĕ Чойбалсана хисеплесе асăнать (4 стр.).
Франци писательне Андрэ Стиле Сталинла премин лауреачĕн дипломне тата хисеплĕ паллине панă (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Америка çар çыннисен тискер ĕçĕсем (4 стр.).

Выранти Советсен суйлавĕн ответлă тапхăрĕ

Ĕçсынни депутачĕсен выранти Совечĕсен суйлавĕ çывхарса килет. Пулас суйлавсем совет çыннисен политикăллă тата производствăллă хастарлăхĕ вăйлăн ÿссе пынă кунсенче иртеççĕ. Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем, И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă генилле произведенийĕ совет халăхне коммунизм тумалли аслă программăпа хĕçпăшаллантарчĕç. Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе рабочисем, колхозниксем, интеллигенци пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план заданийĕсене ăнăçлă пурнăçлаççĕ.

СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Центральнăй Статистика управленийĕ пĕлтернинчен çакна куратпăр: 1952 çулта халăх хуçалăхне малалла аталантармалли плана ăнăçлă тултарнă. Совет Союзĕн пĕтĕм промышленноçĕ 1952 çулта, унчченхи çулпа танлаштарсан, продукци туса кăларассине 11 процент ÿстернĕ, оборудованипе усă курассине лайăхлатнă, ĕç тухăçлăхĕ 7 процент ÿснĕ, çĕнĕ йышши тата çĕнĕ маркăллă машинăсемпе механизмсем 600 яхăн тунă, вĕсем халăх хуçалăхне техника енĕпе малалла аталантарса пыма май параççĕ. 1952 çулта тĕштырăсен пĕтĕм тухăçлăхĕ 8 миллиард пăт пулнă. Хулапа ялти ĕçсыннисен материальнăй пурнăçĕпе культурăллă шайĕ пĕрмай ÿсет.

Чăваш АССР халăх хуçалăхĕ те малалла ăнăçлăн аталанать. Пирĕн Статистика управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх, республика промышленноçĕ 1952 çулта ун чухнехи çултинчен 7 процент нумайрах продукци туса кăларнă. Ялхуçалăхĕ техникăпа хĕçпăшалланни ялхуçалăх ĕçĕсене ытларах механизацилеме май пачĕ.

Коммунизм строительствинче тунă çитĕнÿсем совет çыннисене савăнтараççĕ, малашне чаплăрах çитĕнÿсем тума хавхалантараççĕ. Пĕр çĕнтерÿ патĕнчен тепĕр çĕнтерÿ патне илсе пыракан коммунистсен партине пĕтĕм чĕререн тав туса, совет халăхĕ партипе Совет правительстви тавра, аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр Сталин юлташ тавра тачăрах пĕтĕçсе тăрать.

Суйлавсем умĕнхи кунсенче совет çыннисен патриотла çĕкленĕвĕ пысăк пулни, вĕсен мораллĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ нихçанхинчен те çирĕпрех пулни уйрăмах яр-уççăн курăнса тăрать. Предприятисенче, колхозсенче тата ĕçсыннисен тĕрлĕ обществисемпе организацийĕсенче иртнĕ пухусенче рабочисем, служащисем тата колхозниксем, пурте пĕр шухăшкăмăллă пулса, ĕçсынни депутачĕсен выранти Совечĕсене депутата суйлама совет халăхĕн шанчăклă ывăл-хĕрĕсене, Ленин—Сталин партийĕн аслă ĕçĕшĕн кĕрешсе хăйсене палăртнă çынсене кандидата тăратрĕç.

Депутата суйлама тăратнă кандидатсем хушшинче парти, совет, профсоюз, комсомол организацийĕсен руководителĕсем, промышленноçпа ялхуçалăхĕнче малта пыракан çынсем, совет интеллигенцийĕн паллă представителĕсем. Депутата суйлама тăратнă кандидатсене коммунистсем те, партире тăман çынсем те сĕннĕ. Вĕсем сĕннĕ кандидатсене пур пухусенче те пĕр шухăш-кăмăллă пулса йышăннă. Коммунистсемпе партире тăманнисен никам çĕнтерейми блокĕ, сталинла туслăхпа çирĕпленнĕ блок, хăйĕн иксĕлми вăй-хăватне, совет халăхĕн аслă пĕрлĕхĕ çирĕп пулнине тепĕр хут кăтартса парать.

Ĕçсынни депутачĕсен выранти Совечĕсене депутата суйлама тăратнă кандидатсене округсенчи суйлав комиссийĕсем регистрацилеççĕ. Çак кунсенче суйлав округĕсенче пуринче те суйлав умĕнхи канашлусем пулса иртеççĕ. Суйлав кампанийĕн çĕнĕ, ответлăрах тапхăрĕ пуçланчĕ.

Ĕçсынни депутачĕсен выранти Совечĕсен суйлавне организаципе политика тĕлĕшĕнчен çÿлĕ пусăмра ирттермелле тăвасси парторганизацисен пысăк задачи пулса тăрать. Выранти Советсене Ленин—Сталин партийĕн ĕçĕшĕн кĕрешсе хăйсене пур енчен те палăртнă çынсене, партипе правительство политикине хăйсен гăван ĕçĕ вырăнне хурса, ăна пурнăçа çирĕп кĕртсе пымă пултаракан çынсене суйламалла.

Суйлавсем умĕнхи агитациллĕ-пропагандăллă ĕçе хальхинчен темиçе хут ытларах вăйлатни кирлĕ. Суйлавçăсем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе пулнă хальхи çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерес пулать. КПСС Чăваш обкомĕн пленумĕ çакна палăртрĕ: нумай парторганизацисем агитаторсен ĕçне çителĕксĕр организацилесе ертсе пыраççĕ, вĕсене сайра хутра кăна пухса инструктажсем параççĕ, агитациллĕ ĕçĕн содержанийĕпе сахал интересленеççĕ. Хуласенче, уйрăмах ялсенче, партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене, И. В. Сталин юлташăн генилле çĕнĕ произведенине, суйлав положенине ăнлантарса парасси çителĕксĕр пулса пырать. Парти райкомĕсем куллен ертсе тата тĕрĕслесе тăман пирки Çĕрпÿ, Канаш, Муркаш, Шупашкар, Ишлей районĕсенче чылай агитпунктсем ĕçлемеççĕ, ĕçсыннисем пурăнакан вырăнсенче агитациллĕ-массăллă ĕçе, наглядлăй агитацие кирлĕ пек йĕркелемеççĕ. Культурăпа çутĕç учрежденийĕсем суйлавсем умĕнхи политикăллă-массăллă ĕçе çителĕксĕр хутшăнаççĕ.

Парти организацийĕсен суйлавсем иртерме хатĕрленнĕ тапхăрта ĕçсыннисен политикăллă тата производствăллă активлăхне тата та ытларах вăйлатса пымалла. Социализмлă ăмăртăва анлăрах сарса, промышленноçпа ялхуçалăхĕнче тата транспортра пысăк çитĕнÿсем тăвассишĕн кĕрешмелле.

КПСС обкомĕн пленумĕ выранти Советсен суйлавĕсене иртерме хатĕрленнĕ вăхăтра массăллă-политикăллă ĕçĕн пур формисемпе те анлăн усă курма хушрĕ. Ĕçсыннисен митингĕсемпе пухăвĕсем, лекцисемпе докладсем тата калаçусем иртерни, хаçатсем вуласа пани, наглядлăй агитацие йĕркелени, пичетпе тата радиопа пĕлсе усă курни—çаксем пурте суйлавçăсене партипе правительство политикине тарăнрах ăнланса илме пулăшĕç. Агитациллĕ-пропагандăллă ĕçре И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă произведенине, партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе материалĕсене, Сталинла Конституцин аслă принципĕсене, СССР гражданĕсен прависемпе тивĕçĕ синчен ăнлантарса парасси тĕп вырăнта пулмалла. Ĕçсынни депутачĕсен выранти Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсен ĕçĕпе, вĕсен пурнăçĕпе суйлавçăсене тĕплĕн паллаштарасси çине те уйрăмах тимлĕ пăхни кирлĕ.

Кандидатсемшĕн агитацилес ĕçре довереннăйсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Довереннăйсем пулма малта пыракан, ĕçсыннисем хушшинче авторитетлă рабочисене, колхозниксене тата интеллигенцин чи лайăх представителĕсене суйларĕç. Суйлавçăсен пухăвĕсенче, митингсенче, ятарласа иртернĕ хĕрарăмсен тата çамрăксен пухăвĕсенче—пур çĕрте те довереннăйсемпе агитаторсем коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн хĕрÿллĕн агитацилеме пултарччăр. Çак ĕçре вĕсене куллен пулăшса пырас пулать. Довереннăйсемпе агитаторсен депутата суйлама тăратнă кандидатсен биографийĕсем, суйлав литератури çителĕклĕ пулмалла. Ертсе пыракан работниксен хăйсен те суйлавçăсем хушшинче тăтăшах пулса, вĕсем валли политикăллă докладсем туса памалла, обществăллă-политикăллă ĕçе, депутата суйлама тăратнă кандидатсемшĕн агитацилес ĕçе активна ытларах хутшăнтарма тăрăшмалла.

Суйлавсене ăнăçлă иртерме организациллĕ-техникăллă ĕçсене вăхăтра туса çитермелле. Суйлав участокĕсем суйлавçăсене кĕтсе илме пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитме тивĕç. Суйлав комиссийĕсем хăйсен пархатарлă ĕçне ăнăçлă пурнăçлама пултарччăр тесен, вĕсене парти организацийĕсен куллен пулăшса пымалла.

Суйлавçăсен культурăллă ыйтăвĕсене тивĕçтерессине те манăçа хăвармалла мар. Профсоюзпа комсомол организацийĕсен, культурăпа çутĕç органĕсен хăйсен пĕтĕм ĕçне суйлавсене ăнăçлă иртермелле тăвас тĕллевпе туса пымалла.

Суйлав кампанине çутатас тĕлĕшпе пичетпе радио умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Политикăллă-массăллă ĕçĕн таха опытне, выранти Советсен ĕçне тĕплĕн кăтартса памалла. Кунпа пĕрлех хаçатсен Советсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртса, вĕсене хăюллăн критиклемелле. Хаçатсенче депутата суйлама тăратнă кандидатсен пурнăçĕпе ĕçне анлăн кăтартса парас пулать.

Совет çыннисем çитес суйлава Ленин—Сталин партийĕ тавра тачă пĕтĕçсе тăнипе кĕтсе илеççĕ. Ĕçсыннисен куллен ÿссе пыракан политикăллă тата производствăллă хастарлăхне пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана иртерсе тултарас ĕçе пăхăнтарса, парти организацийĕсен коммунизм строительствинче çĕнĕ çĕнтерÿсем тăвассишĕн пыракан кĕрешĕве куллен ертсе пымалла.

Выранти Советсен суйлавĕ умĕн

Çак кунсенче

Суйлав умĕнхи массăллă-агитациллĕ ĕçе вăйлатнă май, колхозниксемпе колхозницăсен ĕçри хастарлăхĕ татах та ÿсрĕ.

«Броневик» колхоз ялхуçалăхĕнче тунă çитĕнÿсем кашни колхозникăн чĕрине савăнтараççĕ. Колхоз иртнĕ çулта ăнса пулнă тырпула вăхăтра пухса кĕртрĕ, государствăна тырă тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем срокчен парса татрĕ. Вăрлăх фончĕсене хывса çитерне. Колхозниксем çуракине хатĕрленесси çинчен те манмаççĕ: вăрлăхсене тасатса склада хываççĕ, ялхуçалăх машинисене юсаççĕ, выранти удобренисем çителĕклĕ пухса хатĕрлеме тăрăшаççĕ.

«Броневик» колхоз районта чи малтан, декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне, вăрман касса хатĕрлемелли плана тултарчĕ, халĕ колхозниксем суйлав кунĕ тĕлне вăрман турттармалли плана тултарассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Колхозниксен ĕçри хастарлăхĕ пысăк. Вĕсем пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхри заданисене ăнăçлă пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Çакăн пек пысăк çĕкленÿпе тата хавхаланупа ĕçлеççĕ Шупуç ялĕнчи ĕçхресченĕсем суйлав умĕнхи кунсенче.

* * *

Шупуç суйлав участокĕнчи агитпунктра ир пуçласа каçченех çын татăлма пĕлмест. Выранти Советсен суйлав кунĕ çывхарса килнĕ май, ваттисем те, çамрăксем те кунта Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă генилле ĕçне, партин XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенийĕсене, Сталинла Конституцие, суйлав Положенине вĕренме, хаçат-журнал вулама пухăнса лараççĕ. Сĕнтĕрти радиоузел урлă кашни киле радио кĕртнĕ. Суйлавçăсем радио тăрăх Мускавран тата Шупашкартан паракан передачăсене итлеççĕ. Вĕсем суйлав çинчен паракан передачăсене тата тĕнчери лару-тăру çинчен пĕлтерцисене пысăк тимлĕхпе итлеççĕ. Хăйсем ăнланман ыйтусене ăнлантарса пама агитаторсенчен ыйтаççĕ.

Агитпункт суйлавçăсем хушшинчи агитациллĕ-массăллă ĕçĕн центрĕ пулса тăчĕ. Кашни каçах кунта суйлавçăсене валли калаçусемпе докладсем е çамрăксен савăнăçлă каçĕсене иртереççĕ. Ĕç план тăрăх пулса пырать.

Агитпункт ĕçĕ ăнăçлă пуласси агитаторсемпе таччăн çыхăнса ĕçленинчен килет. Çакна агитпунктăн заведующийĕ А. Янушкин юлташ лайăх ăнланать, кашни эрнерех агитаторсемпе канашлу иртерет. Кашни агитатора вун-вуникĕ кил çумне çирĕплетнĕ. Канашлусенче опытлă агитаторсен калаçăвĕсене итленĕ.

* * *

Агитколлектив ялти учительсене, врачсене, ялхуçалăх специалисчĕсене пĕтĕçтерсе тăрать. Агитколлективри докладчиксемпе лекторсем хăйсен пархатарлă ĕçне агитпунктра та, уй-хир тата выльăх-чĕрлĕх бригадисенче те туса пыраççĕ.

Агитколлектив членĕсем суйлавçăсем хушшинче докладсемпе калаçусем нумай иртерчĕç. Çак кунсенче агитпунктра «Ленин ялавĕпе, Сталин юлташ ертсе пынипе, малалла—коммунизм çĕнтерĕвĕ патне» темăпа лекци пулчĕ. Агитаторсем выранти Советсене депутата суйлама тăратнă кандидатсен пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласа параççĕ.

«Большевик» колхоз председателĕ П. И. Сурский, политкружок руководителĕ П. И. Ежуков, ялти клуб заведующийĕ М. Ф. Рожканов тата ытти юлташсем те яланах хăйсене шанса панă ĕçре ответлăха туйса ĕçлеççĕ.

РСФСР тата Чăваш АССР тава тивĕçлĕ учителĕ, ялти шкул заведующийĕ Л. И. Яшмолкина юлташ, ватă пулин те, çак кунсенче халăх хушшинче ырми-канми ĕçлет, ăна ваттисем те, çамрăксем те пысăк кăмăлпа, юратса кĕтсе илеççĕ.

П. СКВОРЦОВ.

Сĕнтĕр районĕ.

Шупашкарти ĕçсыннисен кандидачĕсем

Сталинла премин лауреачĕ

Чăваш государство филармонийĕнче ĕçлекенсен коллективĕ Шупашкар хулинчи 109-мĕш суйлав округĕ тăрăх хула Советне депутата суйлама Сталинла премин лауреатне, Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятельне Филипп Миронович Лукин юлташа кандидата тăратма йышăннă.

Ф. М. Лукин юлташ — Чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕн художествăллă руководителĕ, Чăваш совет композиторĕсен союзĕн правлени председателĕ. Ф. М Лукин композитора пирĕн республикăри ĕçсыннисем лайăх пĕлеççĕ, вăл кĕвĕленĕ юрăсене пур çĕрте те юрлаççĕ.

Творчествăллă ĕçре нумай ĕçленипе пĕр вăхăтрах, Лукин юлташ обществăллă ĕçе активлă хутшăнать. Халиччехи икĕ созывра та Лукин юлташ хула Совечĕн депутачĕ пулнă Вăл хăйне шанса панă ĕçе тÿрĕ кăмăлпа тата чыслăн пурнăçласа пырать.

Врач

Республика поликлиникипе больницинче ĕçлекен врачсен, медицина сестрисен, санитаркăсен пухăвĕ 18-мĕш суйлав округĕ тăрăх хула Советне депутата суйлама поликлиникăпа больница пĕрлешĕвĕн главнăй врачне И. В. Сидиев юлташа кандидата тăратнă.

Трест руководителĕ

«Водосвет» трестĕнчи рабочисемпе служащисен тата инженерсемпе техниксен пухăвĕнче хула Советне депутата суйлама кандидатсем тăратасси çинчен сÿтсе явнă.

Пуху 7-мĕш суйлав округĕ тăрăх хула Советне депутата суйлама трест директорне И. В. Благодатских юлташа кандидата тăратма йышăннă.

Хулари 3-мĕш суйлав округĕ тăрăх хула Советне депутата суйлама пуху «Энергосбыт» контролерне А. С. Шорникова юлташа кандидата тăратнă.

Тава тивĕçлĕ учительница

Хĕрачасен виççĕмĕш шкулĕнче ĕçлекенсем 60-мĕш суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама РСФСР тата Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учительницине, шкул директорне Вера Ивановна Козлова юлташа кандидата тăратнă.

Ку шкул коллективĕ тата 61-мĕш суйлав округĕ тăрăх хула Советне депутата суйлама хула Совет исполкомĕн председатель заместительне Валентина Сергеевна Сергеева юлташа кандидата тăратма йышăннă.

Комсомол работникĕ

Хĕрачасен виççĕмĕш шкулĕнчи преподавательсемпе ытти работниксен коллективĕ 56-мĕш суйлав округĕ тăрăх хула Советне депутата суйлама ВЛКСМ обкомĕн секретарьне Алексей Иванович Иванов юлташа кандидата тăратма йышăннă.

Ватă депутат

Январĕн 23-мĕшĕнче Чăваш АССР Финанс министерствинче ĕçлекенсен пухăвĕ пулнă.

Пухура контрольпе ревизи управленийĕн главнăй ревизорĕ Герасимов юлташ хулари 1-мĕш суйлав округĕ тăрăх хула Советне депутата суйлама Георгий Платонович Платонов юлташа кандидата тăратма сĕннĕ.

Г. П. Платонов юлташ нумайранпа финанс органĕсенче ĕçлет. Иртнĕ суйлавсенче те ăна темиçе хутчен хула Совечĕн депутатне суйланă. Вăл хула Совечĕн яланхи бюджетпа финанс комиссийĕн председателĕ пулса ĕçленĕ. Вăл ертсе пыракан комисси хула Совечĕн исполкомне финанс ĕçне лайăхлатма нумай пулăшнă. Хула Совечĕн исполкомĕ укçатенкĕ мобилизацилемелли плана кашни кварталтах тултарса пынă.

Унтан Федоров, Тарасов тата Барабанов юлташсем Г. П. Платонов юлташăн кандидатурине ырласа, сăмах каланă.

Пуху, пĕр шухăшлă пулса, Г. П. Платонов юлташа хула Советне депутата суйлама кандидата тăратма йышăннă.

Хула Совечĕн депутачĕ пулса 20 çул ĕçлет

Шупашкарти энергетика техникумĕнче ĕçлекенсемпе вĕренекенсен коллективĕ хула Советне 42-мĕш суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учительне Александр Сергеевич Старостин юлташа кандидата тăратма йышăннă.

А. С. Старостин юлташа юлашки 20 çул хушшинче кашни суйлаврах хула Совечĕн депутатне суйланă. Вăл 40 çул хушши ытла хулари вăтам шкулсенче преподаватель пулса ĕçлет.

Хула Совечĕн ĕçне Старостин юлташ активлă хутшăнать. Вăл темиçе çул хушши ĕнтĕ — хула Совечĕн коммунальнăй хуçалăхпа благоустройство енĕпе ĕçлекен яланхи комиссийĕн председателĕ.

Шупашкар районĕнчи «Красный флот» колхозра М. С. Глухов юлташ 18 çул хушши тимĕрçĕ пулса ĕçлет. Вăл колхозăн ялхуçалăх машинисене выранти Советсен суйлав кунĕ тĕлне юсаса пĕтерме тăрăшать.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: М. С. Глухов юлташ сеялкăсене юсать.

С. ВИКТОРИНОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Хула Совет исполкомĕн отчечĕ

Çак кунсенче Шупашкарта, Пионерсен суртĕнче, 11-мĕш суйлав участокĕнчи суйлавçăсен пухăвĕ пулчĕ. Суйлавçăсем Шупашкар хула Совет исполкомĕн ĕçĕсем çинчен отчет итлерĕç. Отчетлă доклада хула Совет исполкомĕн председатель заместителĕ В. Сергеева юлташ туса пачĕ. Вăл исполком суйлавçăсен наказĕсене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен тĕплĕн каласа кăтартрĕ.

1950 çулхи суйлав умĕн суйлавçăсем 85 наказ парса хăварнă. Вĕсем промышленность предприятийĕсен, коммунальнăй хуçалăх предприятийĕсен ĕçне лайăхлатма, пурăнмалли суртсене юсама тата çĕнĕ суртсем лартма, больницăсенче, шкулсенче йĕркелĕх тума куллен кирлĕ гаварсемпе суту-илÿ тăвассине тата ытти ĕçсене лайăхлатма хушнă. Докладчик каланă тăрăх, хула Совечĕн исполкомĕ суйлавçăсен 65 наказне пурнăçланă.

Юлашки çул хушшинче хулара 36 хваттерлĕ пурăнмалли сурт туса пĕтернĕ, 38 хваттерлĕ çурт тума тытăннă, 8 çурта юсанă. Икĕ çул хушшинче пурăнмалли çурт лартакансене 1.830 пин тенкĕ кивçен панă. Вĕсем 344 çурт лартнă. Çак кунсенче хулари çĕнĕ мунчана туса пĕтернĕ. Икĕ пысăк кĕпер тата тарăн çырмасенчен улăхма пусмасем тунă. Атăл хĕрринчи вырăна бетонпа асфальт сарса тата йывăç лартса илемлетнĕ. Хула урамĕсене пĕтĕмпе 50 пин тĕп ытла йывăç лартнă. Хулари электричество линине çĕкетеççĕ. Хăшпĕр урамсене çĕнĕрен чул сарнă.

Çав вăхăтрах хула Совет исполкомĕн ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур, — терĕ Сергеева юлташ. — Суту-илÿ организацийĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ, магазинсенче, ларексенче тата столовăйсенче çитменлĕхсем нумай. Халăха медицина пулăшăвĕ парас ĕçе лайăхлатмалла. Шкулсен ĕçĕнче те çитменлĕхсем сахал мар.

Хула Совет исполкомĕн отчетлă докладĕ тăрăх тухса калакансем исполком ĕçĕнчи çитменлĕхсене хытă критиклерĕç, исполком хула Совечĕн сессийĕсене вăхăтра пухса иртерменнине, ĕçсыннисен жалобисене çийĕнчех пăхса тухманнине палăртрĕç. Хула Совечĕн яланхи комиссийĕсене, уйрăмах сывлăха сыхлас, коммунальнăй хуçалăхпа благоустройство, культурăпа çутĕç комиссийĕсене актив сахал хутшăннă.

Пухура тухса каланă юлташсем хула Совечĕн исполкомĕ решенисем нумай йышăнни, анчах решенисене пурнăçлас ĕçе кирлĕ пек организацилеменни çинчен, исполкомăн хăйĕн ĕçне лайăхлатма кирли çинчен каларĕç.

И. ПРОХОРОВ.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

Дамбăсем тума пуçлаççĕ

ХУСАН, январĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Куйбышев гидроэлектростанцийĕн плотинине туса пĕтерсен питĕ пысăк водохранилищĕри—Жигулевски гинĕсĕнчи шыв Хусан тĕлĕнче те нумай тулать. Кăçалхи çуркуннерен пуçласа строительсем Хусанта дамбăсем тума тытăнаççĕ. Çав дамбăсем хулана шыв илесрен сыхласа тăрĕç. Шыв енче дамбăсен айккисене лайăх хытарса тăваççĕ, тепĕр енчи айккине çерем сараççĕ. Дамбăсем çине асфальт сарса çул тăваççĕ, çывăхра йывăçсем лартса ÿстереççĕ.

Строительсен темиçе миллион кубометр çĕр чавса кăлармалла, насус станцийĕсем туса лартмалла тата Казанка шывне çĕнĕ вырăнпа юхтарма çырма чавмалла.

Хусана строительство ĕçĕсене тумалли механизмсем—экскаваторсем, çĕр чавмалли хăватлă снарядсем, скреперсем, бульдозерсем, канав чавмалли машинăсем, автопогрузчиксем тата ыттисем те илсе килнĕ.

Колхозсем пысăк пулăшу илеççĕ

РИГА, январĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Кăçалхи çул государство Латвири колхозсене 42 миллион тенкĕ кивçен парать. Çак укçапа колхозсем хуçалăх çурчĕсемпе электростанцисем лартаççĕ, мелиораци ĕçĕсене, хуçалăхри тата ытти ĕçсене те тăваççĕ.

Латвири колхозсенче строительство вăйлансах пырать. Иртнĕ çулта вĕсене государство 34 миллион тенкĕ кивçен панă, артельсем хăйсен укçи-тенкипе строительство ĕçĕсене 118 миллион тенкĕлĕх тунă. Ялхуçалăх артелĕсем хуçалăх çурчĕсем темиçе пин туса лартнă, чылай колхозсене электрификацилене, выльăх-чĕрлĕх фермисем валли ăратлă выльăхсем нумай туяннă.

Воронеж хули лайăхлансах пырать

ВОРОНЕЖ, январĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Воронеж хулине гитлерла оккупантсенчен ирĕке кăларнăранпа 10 çул тултарнă. Çак иртнĕ çулсенче хулара промышленноçа юсаса çитернĕ. Вăл продукци туса кăларасси, вăрçă умĕнхи вăхăтрипе танлаштарсан, икĕ хут çурă ÿснĕ. Воронеж хулинчи промышленность çĕршыва экскаваторсем, тимĕрçĕ ĕçне тумалли оборудовани, тырă тасатмалли тата ытти машинăсем парса тăрать.

Хулара пурăнмалли çуртсем вăрçă умĕнхи вăхăтри чухлĕ шутланаççĕ. Хула архитектура тĕлĕшпе çĕнелни ытларах та ытларах палăрса пырать. Хула хĕррисем нумай улшăннă. Унта нумай хутлă çуртсем туса лартнă, паркcем тата скверсем тунă. Юлашки пилĕк çул хушшинче хулара урамсемпе тротуарсене асфальт тата чул 800 пин тăваткал метр чухлĕ сарнă.

Çуртыррисем шăтса тухнă

КАРШИ, январĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Узбекистанри Кашка-Дарья облаçĕнче тĕштырăсем акаççĕ. Вуншар пин гектар çине тулă тата урпа акнă. Гузар, Бешкент тата Кассан районĕсенчи колхозсен уй-хирĕсенче акнă тĕштырăсем шăтса тухнă.

Çĕнĕ поселоксем

КУЙБЫШЕВ, январĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «Средволгострой»ăн строительство участокĕсенче хăма çуракан заводсем ĕçлеççĕ, каменщиксем çĕнĕ çуртсем купалаççĕ. Çĕре шăвармалли системăсем тăвакансене валли Куйбышев, Чкаловски тата Саратов облаçĕнчи районсенче çĕнĕ поселоксем тăваççĕ.

Куйбышев облаçĕнчи Больше-Глушецки районĕнче çĕнĕ поселок тума пуçланă. Кунта пурăнмалли çуртсем, электростанци лартаççĕ, механически мастерской, гараж, складсем тăваççĕ.

Кăçалхи çул Атăл леш енче уй-хире шăвармалли системăсем тăвакансене валли пурăнмалли çуртсем вуншар пин тăваткал метр чухлĕ тăваççĕ. Проектировщиксем çĕнĕ рабочи поселоксен проекчĕсене хатĕрлеççĕ.

Çĕнĕ урамсем

УСТЬ-КАМЕНОГОРСК, январĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕçсынни депутачĕсен Усть-Каменогорск хула Совет исполкомĕ хула хĕррисенче юлашки вăхăтра ÿссе ларнă çĕнĕ урамсене ят панă. Металлургсем, энергетиксем, строительсем пурăнакан урамсене Совет Союзĕн Геройĕсен Гастелло, Панфилов, Покрышкин ячĕсене панă. Ку урамсенче нумай хваттерлĕ çĕнĕ çуртсем туса лартнă. Икĕ çул хушшинче Усть-Каменогорск хулинче пурăнмалли çуртсем 300 ытла туса лартнă. Хула халăхĕ валли ача сачĕсемпе яслисем, клубсем, вицĕ шкул, больница тата 13 магазин туса лартнă.

Хальхи вăхăтра хулара металлургсен культура дворецне тăваççĕ.

Çĕр мамăкĕ тасатакан çĕнĕ заводсем

ТАШКЕНТ, январĕн 24-мĕшĕ (ТАСС). Узбекистанра çĕр мамăкĕ тасатмалли заводсем лартас ĕç сарăлса кайнă. Ташкент облаçĕнчи Беговат районĕнче тата Кара-Калпак АССР-ĕнчи Шабаз районĕнче çĕнĕ предприятисем туса лартнă. Часах Мирзачулра çĕр мамăкĕ тасатмалли пысăк завод ĕçе кĕрет.

Республикăри ытти облаçсенче те çĕнĕ заводсем тăваççĕ.

КПСС ЧĂВАШ ОБКОМĔН III-мĕш ПЛЕНУМĔ

Ĕçсынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен суйлавĕ тата парти организацийĕсен задачисем

КПСС Чăваш обкомĕн III-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум çак ыйтусене сÿтсе явнă:

1. Ĕçсынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен суйлавĕ тата парти организацийĕн задачисем.

2. 1953 çулхи сурапине хатĕрленесси тата республикăри колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарасси мĕнле пыни çинчен.

Малтанхи ыйту тăрăх КПСС Чăваш обком секретарĕ Т. А. Ахазов юлташ доклад туса пачĕ.

Ахазов юлташ вырăнти Советсен суйлавне хатĕрленес ĕç партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем, Сталин юлташ съездăн юлашки ларăвĕнче каланă историллĕ сăмах тата унăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле ĕçĕ хавхалантарнă совет çыннисен политикăлла тата ĕçлĕ çĕклене йĕвĕ пысăк пулнă лару-тăрура иртнине палăртать.

Пирĕн Тăван çĕршыв хăйĕн мĕнпур вăйĕсене чечеклентерсе пырать, коммунизм строительствинче çĕнĕ те çĕнĕ çитĕнÿсем тăвать. Коммунизм строительствин задачисене ăнăçлă татса парас ĕçре, пирĕн çĕршывăн мĕнпур пурнăçĕнче ĕçсынни депутачĕсен Совечĕсем уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрасçĕ, мĕншĕн тесен вĕсем Совет государствин политикăлла никĕсĕ пулса тăрасçĕ.

Пирĕн çĕршывра вырăнти Советсен суйлавĕ тĕнчери чи демократиллĕ суйлав системи тăрăх пулса иртет. Совет суйлав системи пирĕн çĕршыври мĕнпур граждансене суйлав кампанине активлăн хутшăнма май парать. ССР Союзĕнче суйлавсем чăннипех ирĕклĕ, чăннипех демократиллĕ суйлавсем пулса тăрасçĕ.

Вырăнти Советсен çитес суйлавĕ,— тет Ахазов юлташ,—пысăк та ответлă политикăлла кампани. Суйлавсене хатĕрленсе ирттерес ĕçре парти организацийĕсен тĕп задачи вăл—коммунистсемпе партире тăманнисен блокне малалла тĕреклетесси, район, хула, ял, поселок Совечĕсене рабочисен, колхозниксен, интеллигенци чи лайăх представителĕсене, хăйсене практикăлла ĕçре палăртнă, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн кĕрешме пултарнине кăтартнă, суйлавçăсем шанса тăракан çынсене суйламалла тăвасси пулать. Вырăнти Советсене депутатăн аслă ятне илме тивĕçлĕ, хăйсене лайăх тыткалакан, ĕçе чĕререн тăрăшса тăвакан çынсене суйлас пулать.

Малалла докладчик парти организацийĕсем ÿмĕнче вырăнти Советсен суйлавне хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе тăракан организациллĕ тата организациллĕ-техникăллă ыйтусем çинче чарăнса тăрать. Парти организацийĕсем суйлавсене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çÿлĕ пусăмра ирттермелле тăвас пулать, вĕсен суйлав системине пăсма памалла мар, Сталинла Конституцие тата ĕçсынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсене суйламалли положение çирĕп тытса пымалла. Суйлава мĕнпур суйлавçăсене хутшăнтармалла тăвас пулать, суйлавçăсем хăйсене Сталинла Конституци панă правăпа туллин усă курма пултарччăр.

КПСС обкомĕн, районсемпе хула комитечĕсен иртнĕ суйлавсенче пулнă йăнăшсемпе çитменлĕхсене шута илес пулать, вĕсене çак суйлавра текех тумалла мар.

Анчах та, тет докладчик, хăшпĕр райкомсемпе хула комитечĕсем иртнĕ суйлавсен урокĕсене шута илмесçĕ. Тата та ытларах, суйлавсем пирвайхи хут мар иртнине шута илсе вĕсем лăпланса ларасçĕ, вĕсем суйлав ирттерес ĕçре пулнă опыта шанса суйлав кампанипе çыхăнса тăракан ыйту çине кирлĕ пек пăхмасçĕ, организациллĕ тата организациллĕ-техникăллă ĕçре пысăк çитменлĕхсем тăвасçĕ, суйлав участокĕсенче агитациллĕ-массăллă ĕçе сарса яма кирлĕ мерăсем йышăнмасçĕ. Ахазов юлташ суйлава хатĕрленнĕ вăхăтра организациллĕ ĕçсенче Канашпа Шупашкар хулисенче, Канаш, Елчĕк, Вăрмар, Улатăр тата ытти хăшпĕр районсенче чылай йăнăшсем тунине палăртать.

Халĕ партипе совет организацийĕсен уйрăмах суйлав комиссийĕсен ĕçĕсем çине тимлĕ пăхмалла, вĕсене практикăллă ĕçре куллен пулăшмалла; вĕсем валли йĕркеллĕ ĕçлеме кирлĕ условисем туса памалла. Суйлав участокĕсен çурчĕсене культурăллă йĕркелесе çитермелле. Предприятисен, колхозсен, государство учрежденийĕсен руководителĕсен суйлав участок комиссийĕсене суйлав участокĕсене йĕркелесе çитерме пулăшмалла.

Суйлав кампанийĕсене ирттерни çакна кăтартать, тет Ахазов юлташ, КПСС райкомĕсемпе хула комитечĕсен организациллĕ тата организациллĕ-техникăллă мĕнпур ĕçсем çине тимлĕ пăхмалла, суйлава хатĕрленсе ирттерес мĕнпур ĕçе тĕплĕн пĕлмелле. Çак питех те кирлĕ ĕçре «пĕчĕк» ĕçсем пулма пултараймасçĕ. Суйлавçăсен списокĕсене тĕрĕс тунă-и, суйлавçăсенчен кама та пулсан списока кĕртмесĕр хăварман-и, вĕсен хушамачĕсене пăтраштарман-и, сасăламалли пулĕмсене мĕнле йĕркеленĕ, вăрттăн сасăлама кирлĕ условисем туса панă-и, суйлав комиссийĕсене çыхăну хатĕрĕсем, суйлав документĕсем уйăрса панă-и тата ыттисем те — çак ыйтусемпе партипе совет организацийĕсен пуринпе те интересленмелле.

Ахазов юлташ хăйĕн докладĕнче парти организацийĕсен агитациллĕ-массăллă ĕçĕсем çинче уйрăмах чарăнса тăрать. Вырăнти Советсен суйлавĕ — чи массăллă политикăлла кампани. Çак кунсенче массăсем хушшинче политикăлла ĕçе йĕркелесе ярассишĕн парти организацийĕсен ответлăхĕ уйрăмах ÿсет.

Райкомсемпе хула комитечĕсем ÿмĕнче агитаторсен нумай йышлă çарĕн ĕçне тĕрĕс организацилес, вĕсене И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле произведенийĕ çинчен, партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе материалĕсем çинчен ăнлантарса парас ĕçе организацилес задача тăрать. Ĕçсыннисене Сталинла Конституцин тĕп принципĕсем çинчен, совет гражданĕсен прависемпе обязанноçĕсем çинчен, вырăнти Советсене суйламалли положени çинчен анлăн ăнлантарса памалла. Агитациллĕ-пропагандăллă ĕçре социализм пирĕн çĕршывра пĕтĕм тĕнчипе историллĕ çĕнтерÿсем туни çинчен, совет халăхĕ миршĕн тата халăхсем хушшинчи хăрушсăрлăхшăн кĕрешни çинчен, советлă общество тата государство стройĕ капитализмлă стройран малта тăни çинчен каласусемпе докладсем ирттересси пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Ĕçсыннисене совет халăхĕ коммунизм обществи тăвассишĕн кĕрешсе тунă çитĕнÿсем çинчен пурнăçран илнĕ примерсем тăрăх тĕплĕн ăнлантарса парас пулать. Кашни ĕçсынни çакна лайăх пĕлсе тăтăр: пирĕн çĕршыв пысăк çĕнтерÿсем турĕ пулсан, вĕсене социализмлă строй çĕнтернипе, коммунистсен партийĕ ăслăн ертсе пынипе,—ку вăл совет стройĕн пурнăçлă никĕсĕ пулса тăрать, — халăхсен аслă çулпуçĕпе учителĕ И. В. Сталин юлташ генилле ертсе пынипе тунă. Агитациллĕ-массăллă ĕç сталинла пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана ăнăçлă тултарассишĕн ĕçсыннисене кĕрешĕве мобилизацилеме пулăшмалла.

Докладчик депутата суйлама тăратнă кандидатсемшĕн агитацилесси пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртать. Çак ĕç çине парти организацийĕсен уйрăмах тимлĕн пăхмалла.

Суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче пĕтĕм агитациллĕ-массăллă ĕçĕн центрĕ агитпункт пулса тăрать. Участоксенче политикăллă-массăллă ĕçе анлăн сарса яни тата ăна тĕплĕн туса пыни суйлава ирттерес ĕçре пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăрать.

Нумай агитпунктсем суйлав кампанийĕн малтанхи кунĕсенченех суйлавçăсем хушшинче ăнлантару ĕçне анлăн сарса ячĕç. Ку тĕлĕшпе докладчик Чкаловски районĕнчи 14-мĕш суйлав участокĕнчи агитпункт ĕçне илсе кăтартать. Кунта суйлавçăсен пухăвĕсене тăтăш ирттересçĕ, докладсемпе лекцисем туса парасçĕ, кинофильмсем кăтартасçĕ, пултарулăх коллективĕсен выступленийĕсем пуласçĕ. Агитпункт заведующийĕ шкул директорĕ Хамдеев юлташ суйлавçăсем валли: «Сталин юлташ социализмăн экономикăллă тĕп законне усса тата никĕслесе пани», «Сталин юлташ социализмран майĕпен коммунизма куçма кирлĕ малтанхи условисем çинчен» лекцисем ирттернĕ. Агитпунктра çавăн пекех Сталинла Конституци çинчен, совет суйлав системи çинчен, партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем çинчен чылай лекцисем ирттернĕ. Агитаторсене вуншар килсем тăрăх çирĕплетсе тухнă. Вĕсем партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсем тăрăх, Сталинла Конституци çинчен, вырăнти Советсене суйламалли положени çинчен каласусем ирттересçĕ.

Шупашкар хулинчи 14-мĕш суйлав участокĕнчи агитпункт («Электрик» клуб), Вăрмар районĕнчи 24-мĕшпе 25-мĕш суйлав участокĕсенчи агитпунктсем, Çĕрпÿ районĕнчи Просвещенски агитпункт, Çĕрпÿ районĕнчи Рынкă салинчи суйлав участокĕнчи агитпункт хăйсен ĕçĕсене лайăх туса пырасçĕ.

Анчах та Ишлей, Элĕк, Канаш, Çĕмĕрле тата ытти хăшпĕр райкомсем суйлав участокĕсенчи агитпунктсене кая юлса уçнă. Ишлей районĕнче 23 агитпунктран 5 агитпункт юлашки кунсене çитиччен ĕçе тытăнман. «За коммунизм» Ленин ячĕпе тăракан «Заря коммунизма» колхозсенчи парти организацийĕсенче агитаторсенчен нумайăшĕ нимĕн те тумасçĕ. Агитациллĕ-пропагандăллă ĕç МТС коллективĕнче те начар пырать.

Хула комитечĕсемпе райкомсен мĕнпур агитпунктсенче массăллă-политикăллă ĕçе сарса яма, агитпунктсен çурчĕсене лайăх йĕркелеме тăрăшмалла. Кунта хаçат-журналсем çителĕклĕ пулччăр, витринăсем, плакатсем пулччăр.

Хула комитечĕсемпе райкомсен тата пуçламăш парторганизацисен задачи вăл—политикăллă агитацин идейăллă шайне çÿлĕ пусăма çĕклесси пулать. Агитаторсене лайăх ертсе пымалла, вĕсен теориллĕ тата методикăллă пĕлĕвне тăтăш ÿстермелле, вĕсен ĕçне куллен тĕрĕслесе тăмалла.

Ахазов юлташ уйрăм парторганизацисене халăх хушшинче политикăллă агитацие вăйлатас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕшĕн критиклет. Сĕнтĕр, Красноармейски, Вăрнар районĕсенче суйлав кампанийĕ пуçланнăранпа агитаторсен канашлăвĕсене ирттермен, çапла вара агитаторсен вырăнти Советсен суйлавне ирттернĕ вăхăтра агитациллĕ-массăллă ĕçе вăйлатас ыйту тăрăх квалификациллĕ инструктаж илеймен. Муркаш, Вăрмар, Ишлей тата ытти хăшпĕр районсенче уйрăм агитколлективсенчи агитаторсем уйăхшар хушши инструктаж илеймесçĕ, вĕсем валли семинарсем те ирттермесçĕ, пĕр-пĕрин опычĕпе паллашма вĕсене канашлăва пухмасçĕ. Канаш хулинчи тата ытти хăшпĕр районсенчи чылай парти организацийĕсенче агитаторсем хушшинче ĕçлессине начар йĕркеленĕ.

Агитациллĕ ĕçĕн ăнăçлăхĕ чылай енчен çак ĕçе ертсе пыракан партипе совет работникĕсем, хуçалăх руководителĕсем хутшăннинчен килет. Вĕсен суйлавçăсем ÿмĕнче лекцисем тата докладсем туса памалла, ĕçсыннисем интересленекен пур ыйтусем тăрăх та квалификациллĕ ответсем пама тăрăшмалла. Ахазов юлташ КПСС Улатăр райкомĕн секретарĕсене Поверенновпа Латышев юлташсене критиклет, вĕсем политикăллă докладсем сайра хутра кăна туса парасçĕ.

Суйлав пулассипе уйăх та юлмарĕ ĕнтĕ. Агитациллĕ-массăллă ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтерес пулать. Кашни агитпунктăн, кашни агитколлективăн, агитаторăн масса хушшинче ăнлантару ĕçне анлă сармалла. Халĕ ĕнтĕ, вырăнти Советсене депутата суйлама кандидатсем тăратса çитерни хыççăн, наглядлăй агитацие анлăн сармалла. Суйлав кампанийĕ хăйĕн чи ответлă тапхăрне—коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн агитацилемелли тапхăра кĕчĕ. Халĕ агитациллĕ-массăллă ĕç тата депутата суйлама тăратнă кандидатсемшĕн агитацилесси—суйлава хатĕрленес ĕçре парти организацийĕсен тĕп задачи пулса тăрать. Парти организацийĕсен, агитаторсен, пропагандистсен задачи вăл—суйлава мĕнпур суйлавçăсене хутшăнтармалла тăвасси тата мĕнпур кандидатсене пĕр шухăшлă пулса депутата суйламалла тăвасси пулать.

Ахазов юлташ суйлав кампанийĕнче культурăпа сутĕç учрежденийĕсемпе, киносемпе, искусство учрежденийĕсемпе анлăн усă курма кирли çинчен калать. Суйлав кампанийĕнче пичет уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртса, республикăри тата районсенчи хаçатсем суйлав ыйтăвĕсене çутатас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине кăтартса парать.

Ахазов юлташ Чăваш парторганизацийĕн партиллĕ-политикăллă ĕçне малалла лайăхлатса пырас задачăсем çинче тĕплĕн чарăнса тăрать, пуçламăш парторганизацисене ертсе пырассине лайăхлатма кирли çинчен, хуçалăхлă-политикăллă задачăсене татса парас ĕçре вĕсен пĕлтерĕшĕпе ответлăхне ÿстерме кирли çинчен калать. Вăл çапла калать: Чăваш республикинчи ĕçсыннисем вырăнти Советсен суйлавĕ кунне хуçалăхпа культура строительствинче çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илĕç, çапла вара сталинла пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана ăнăçлăн тултарассишĕн пыракан пĕтĕм халăх кĕрешĕвне хăйсен вăйне хурĕç.

Юлашкинчен Ахазов юлташ çапла каланă:

— Пирĕн çĕршывра государство влаçĕн органĕсен суйлавĕ—пĕтĕм халăх уявĕ пулса тăрать. Пирĕн çĕршывра суйлавсем яланах политикăллă çĕкленÿ пысăк пулнă лару-тăрура иртессĕ, вĕсем совет халăхĕн моралллĕ-политикăллă пĕрлĕхне, совет халăхĕ Коммунистсен партийĕпе Совет правительствине вĕçĕмсĕр шанса тănине кăтартса парассĕ. Вырăнти Советсен çитес суйлавĕнче пирĕн республикăри ĕçсыннисем, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, хăйсем Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тавра, аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр Сталин юлташ тавра таччăн пĕтĕçсе тăнине тата тепĕр хут кăтартса парĕç, пĕтĕм тĕнчипе мир ĕçне тĕреклетессишĕн, пирĕн çĕршывра коммунизм тăвассишĕн тата активлăрах кĕрешме хатĕр тăнине кăтартса парĕç.

* * *

Доклад тăрăх пренисем пуçланаççĕ. Чи малтан КПСС Улатăр хула комитечĕн секретарĕ Чистопольский юлташ сăмах илет. Вăл хулари ĕçсыннисен политикăллă тата производствăллă çĕкленĕвĕ пысăк пулни çинчен калать. Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе, Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă генилле ĕçĕсемпе хавхаланса, Улатăр хулинчи ĕçсыннисем вырăнти Советсен суйлавне производствăллă çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Хулари нумай предприятисенче суйлав кунĕ тĕлне—февралĕн 22-мĕшне—икĕ уйăхри производство планне тултарассишĕн социализмлă ăмăрту вăйланса пырать.

Вырăнти Советсен суйлавне ăнăçлă ирттересси, пуринчен ытла, массăллă-политикăллă ĕçе лайăх организациленинчен килет. Çавăнпа та, тет Чистопольский юлташ, хула комитечĕ çак ĕç çине уйрăмах тимлĕ пăхать. Хула комитечĕ агитпункт заведующийĕсемпе агитаторсем валли инструктаж ирттернĕ, çавăн пекех агитаторсен пухăвне ирттернĕ. Суйлава хатĕрленсе ирттересси çинчен хулари парти активĕн пухăвĕнче сÿтсе явнă. Хула комитечĕн бюровĕнче агитпунктсен, агитаторсен ĕçĕсем çинчен, парти организацийĕсем суйлава хатĕрленес ĕçе мĕнле ертсе пыни çинчен ыйту ларса сÿтсе явасçĕ. Январĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа агитпунктсенче суйлавçăсен пухăвĕсене ирттерме тытăннă. Унта лекцисем тата докладсем пуласçĕ.

Чистопольский юлташ суйлавсене хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене те палăртать. Тĕп çитменлĕх çакă пулать: чылай пуçламăш парторганизаци секретарĕсем, советпа хуçалăх работникĕсем лăпкăлăх шухăшĕпе пурăнасçĕ. Вĕсем çапла шутласçĕ: суйлава пирвайхи хут кăна иртерместпĕр, опытсем пур пирĕн, çавăнпа та ĕç ахалех лайăх иртет, тесе шутласçĕ. Хула комитечĕ çакнашкал сиенлĕ шухăша пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнать.

Вăл çавăн пекех республикăри хăшпĕр организацисене суйлав кампанине тивĕçлипе хутшăнманшăн критиклет. Тĕслĕхрен, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Кинофикаци управленийĕн ĕçне критиклет. Улатăр хулинче хальхи вăхăтра суйлавпа нихăш енчен те çыхăнман картинăсем кăтартасçĕ.

Суйлава хатĕрленес ĕçре профсоюз организацийĕсем активлă хутшăнни те сисĕнмест. Профсоюз членĕсен нумай йышлă çарне суйлава хатĕрленсе ирттерес ĕçе активлă хутшăнтарас пулать. Кун пек тăвасси вăл КПСС райкомĕсемпе хула комитечĕсенчен кăна мар тата облпрофсоветпа профсоюзсен обкомĕсенчен те килет.

Юлашкинчен Чистопольский юлташ çапла шантарса калать: Улатăр хулинчи парти организацийĕ суйлава хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе мĕнпур вăя хурса ĕçлĕ, вăл суйлава организаци тата идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çÿлĕ пусăмра ирттермелле тăвĕ.

Малалла КПСС Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ Никитин юлташ сăмах илет. Вăл та ĕçсыннисен политикăллă тата производствăллă çĕкленĕвĕ пысăк пулни çинчен калать. Хулари предприятисенче вырăнти Советсен суйлавĕ ячĕпе производство планĕсене тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн, чĕр таварсемпе материалсене, топливăпа электроэнергие перекетлессишĕн, пысăк пахалăхлă продукци кăларассишĕн социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пыни çинчен калать.

Никитин юлташ хула комитечĕпе пуçламăш парторганизацисем вырăнти Советсен суйлавне хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туни çинчен калать. Суйлав кампанийĕ пуçланнăранпа КПСС хула комитечĕ икĕ хутчен пуçламăш парторганизаци секретарĕсен канашлăвне, çавăн пекех агитпункт заведующийĕсен канашлăвне, хулари агитаторсен пухăвне ирттернĕ. Вĕсенче вырăнти Советсен суйлавне хатĕрленсе ирттерес ĕçпе çыхăнса тăракан ыйтусене, агитациллĕ-массăллă ĕçпе организациллĕ ĕçсен ыйтăвĕсене пăхса тухнă.

Пуçламăш организацисем нумайăшĕ суйлавçăсем хушшинче агитациллĕ ĕçе вăхăтра пуçласа ячĕç, суйлав кампанийĕн малтанхи кунĕсенчен пуçласах агитаторсене ĕçлĕхлĕн ертсе пырасçĕ, вĕсене куллен пулăшасçĕ.

Чăвашпотребсоюз агитколлективĕнче (ăна Исаев юлташ ертсе пырать) агитаторсем валли семинарсем, канашлусем тата тĕрлĕ ыйтусем тăрăх лекцисемпе докладсем тăтăш ирттересçĕ. Рыбина, Быстрякова, Зольников тата ытти агитаторсем суйлавçăсем хушшинче иртнĕ суйлавранпах ĕçлессĕ, вĕсем хăйсен суйлавçисем патĕнче тăтăш пуласçĕ, каласусем ирттересçĕ, хаçатсемпе журналсем вуласа парасçĕ, суйлавçăсене хумхантаракан ыйтусем тăрăх тивĕçлĕ ответсем парасçĕ. Тĕслĕхрен, Рыбина юлташ суйлавçăсем хушшинче партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсем тăрăх, вырăнти Советсене суйламалли положени çинчен, Совет Союзĕнчи граждансен прависемпе обязанноçĕсем çинчен тата ыттисем çинчен те каласусем ирттернĕ.

14-мĕш суйлав участокĕнчи ялан ĕçлекен агитпункт (заведующийĕ Булаев юлташ) пысăк ĕçсем туса ирттерет.

Оратор çавăн пекех тата суйлава хатĕрленес ĕçе КПСС хула комитечĕ енчен ертсе пырас ĕçри пысăк çитменлĕхсене палăртать. Уйрăм агитпунктсем çаплах начар ĕçлессĕ-ха. Хăшпĕр агитаторсем суйлавçăсен списокĕсене тунă чухне кăна суйлавçăсемпе тĕл пуласçĕ. Ĕçсыннисен чылай пысăк пайĕ патне агитациллĕ ĕç çитмест. Хулара суйлав хăçан пулассине пĕлмен суйлавçăсем те тĕл пуласçĕ. Никитин юлташ ĕçсыннисем хушшинче политикăллă агитаци ĕçне начар организациленĕшĕн пединститутри, ялхуçалăх институтĕнчи, çăкăр трестĕнчи, Чăвашгосиздатри тата хăшпĕр учрежденисенчи парторганизацисен ĕçĕсене критиклет. Наглядлăй агитацие организацилес ĕçре те пысăк çитменлĕхсем пур. Суйлава хатĕрленес ĕçе комсомолпа профсоюз организацийĕсене начар хутшăнтарнă. Хула комитечĕ çак çитменлĕхсене хăвартрах пĕтерес тата ĕçсынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен суйлавне организованнă ирттермелле тăвас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнать.

Чăваш облпрофсовет президиумĕн председателĕ Романова юлташ хăйĕн сăмахĕнче вырăнти Советсен суйлавне ирттернĕ май профсоюз организацийĕсем ÿмĕнче пысăк задачăсем тăнине палăртать. Профсоюз комитечĕсен социализмлă ăмăртăвăн çĕнĕ хăватлă çĕкленĕвне ертсе пымалла, ĕçсыннисен активлăхне йышăннă социализмлă обязательствăсене ирттерсе тултарма мобилизацилемелле. Çакăнпа пĕрлех профсоюз организацийĕсен, парти организацийĕсем ертсе пынипе, цехсенче, бригадăсенче, стройкăсенче, общежитисенче массăллă ăнлантару ĕçне анлă сарса ямалла. Массăллă-ăнлантару ĕçне профсоюз организацийĕсен мĕнпур культурăпа сутĕç учрежденийĕсене хутшăнтармалла.

Профсоюзсен вырăнсенчи нумай организацийĕсем суйлав кампанине начар хутшăнасçĕ-ха.

Романова юлташ облпрофсовет çакă политикăллă пысăк кампанире профсоюз организацийĕсен активлăхне ÿстерес тĕлĕшпе туса ирттерекен ĕçсем çинчен пĕлтерет. Çавăнпа пĕрлех вăл райкомсемпе хула комитечĕсенчен профсоюз организацийĕсене вĕсем ÿмĕнче тăракан задачăсене татса парас ĕçре пысăк пулăшу пама тата вĕсене ертсе пыма ыйтать.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ Андреева юлташ суйлава организациллĕ ĕçсем енĕпе хатĕрленес ыйтусем çинче ытларах чарăнса тăрать.

Вăл ку таранччен хăшпĕр суйлав комиссийĕсем ĕçе тытăнманнине палăртать. Тĕслĕхрен, Сĕнтĕр районĕнчи суйлав комиссийĕ нимĕн те тумасть. Вăл пĕр лару та ирттермен. Пĕр суйлав участокĕнче те, пĕр ял Советĕнче те суйлав комисси членĕсенчен ку таранччен никам та пулман.

Уйрăм руководительсем суйлав комиссисенче ĕçлеме уйăрнă юлташсене хушса çĕнĕ ĕçсем парасçĕ. Çавăн пек, Чăвашполиграфиздат управленийĕн начальникĕ Капитонов юлташ суйлав комиссийĕн председательне — типографи работникне командировкăна янă. Вăл халĕ те командировкăран таврăнман-ха.

Андреева юлташ суйлав положенине пăсни çинчен калакан уйрăм фактсем çинче чарăнса тăрать. Уйрăмах Вăрмар райисполкомĕ пысăк йăнăшсем тунă. Çак йăнăшсем пуринчен ытла исполком руководителĕсемпе ытти работниксем суйлав положенине пĕлменнинчен килнĕ. Суйлав положенине тĕплĕн вĕренмелле.

Мĕнпур суйлав комиссийĕсен ĕçне вăйлатмалла.

Çыхăну органĕсем умне те тивĕçлипе пысăк ыйтусем кăларса тăратасçĕ. Нумай районсенче телефон çыхăнăвĕ йĕркеллĕ мар. Телефон, телеграф тата ытти çыхăнусене çак кунсенче лайăх ĕçлемелле тăвас пулать.

Андреева юлташ суту-илÿ организацийĕсем умне те пысăк требованисем кăларса тăратать. Радиопитани çитменни çинчен чылай çĕртен жалобăсем килесçĕ. Районсенче краççын, лампăсем, хăюсем тата ыттисем çитмесçĕ. Ку тĕлĕшпе халех татăклă мерăсем йышăнас пулать.

— Ĕçсынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен суйлавĕ,—тет юлашкинчен Андреева юлташ,—совет демократийĕ çĕнĕрен пысăк çĕнтерÿ тунине кăтартĕ. Нимĕн иккĕленмелли те çук,—пирĕн халăх тата тепĕр хут çак суйлавра пĕтĕçÿллĕ, пĕрлĕхлĕ пулнине, Ленин—Сталин партине чĕререн парăнса тăнине кăтартĕ.

Новиков юлташ—КПСС Канаш хула комитечĕн секретарĕ — парторганизаци вырăнти Советсен суйлавне хатĕрленнĕ май туса ирттерекен ĕçсем çинчен каласа парать. Суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе пуçламăш парторганизацисем ÿмĕнче тăракан задачăсем çинчен декабрь уйăхĕнче парторганизаци секретарĕсен канашлăвĕнче сÿтсе явнă. Ун чухнех агитаторсен йышне çĕнĕрен пăхса тухнă, агитколлективсене предприятисемпе учрежденисенче лайăх ĕçлекен çынсем хутшăнтарнă. Хальхи вăхăтра хулара агитатор пулса пин çынна яхăн ĕçлет. Агитколлективсем нумайăшĕ агитаторсен семинарĕсене вăхăтра ирттересçĕ. Пĕтĕм агитациллĕ ĕç партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе съезд пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тăрăх панă директивăсене ăнăçлăн пурнăçламалла тăвас енĕпе пулса пырать.

Вырăнти Советсен суйлавне ирттермелле туни çинчен пĕлтерни хулари предприятисенче производствăллă çĕнĕ çĕкленÿ пуçарса ячĕ. Ĕçсыннисем социализмлă çĕнĕ обязательствăсем йышăнасçĕ, стахановла вахтăна тăрасçĕ.

Анчах та, тет Новиков юлташ, суйлава хатĕрленес ĕçре çитменлĕхсем те сахал мар-ха. Чугун çул деповĕнчи, Канашторгри агитколлективсенчи хăшпĕр агитаторсем суйлав положенийĕ çинчен хăйсем те начар пĕлессĕ. Вагонсем юсакан, моторсем юсакан заводсенчи агитколлективсем те пайнхи задачăсен çÿлĕшĕнче тăмасçĕ-ха. Хула комитечĕ мĕнпур агитколлективсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе мерăсем йышăнчĕ. Çак тĕллевпе парти организацийĕсене хула комитечĕн членĕсенчен тата парти активĕнчен 20 çын янă.

Хулара наглядлăй агитаци тивĕçлĕ вырăнта тăмасть. Халĕ çак çитменлĕхе пĕтерсе пыратпăр.

КПСС Сĕнтĕр райкомĕн секретарĕ Перлов юлташ районти ĕçсыннисем суйлав кунне тивĕçлипе кĕтсе илессишĕн ăмăртса ĕçлени çинчен пĕлтерет. Нумай колхозсенчи ĕçченсем суйлав кунне суракине пур енчен те хатĕрленсе çитнипе тата вăрман хатĕрлев планне тултарнипе палăртма тăрăшасçĕ. МТС коллективĕ мĕнпур тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсаса çитерессишĕн кĕрешет.

Нумай агитколлективсем суйлавçăсем хушшинче агитацие пропаганда ĕçне анлăн сарса ячĕç. Уйрăмах Юнкă суйлав участокĕпе Сĕнтĕр суйлав участокĕнчи агитпунктсем политикăллă агитаци ĕçне лайăх организациленĕ. Çак агитпунктсенче лекцисемпе докладсем час-часах пуласçĕ. Агитаторсене вуншар кил тăрăх çирĕплетсе тухнă. Вĕсем суйлавçăсем хушшинче агитациллĕ ĕçе тимлĕн туса пырасçĕ. Çак агитпунктсенче çамрăк суйлавçăсен, хĕрарăмсен каçĕсене ирттернĕ, художествăллă пултарулăх коллективĕсем хăйсен ĕçĕсене кăтартасçĕ.

Перлов юлташ çавăн пекех тата суйлав кампанине ирттерес ĕçре çитменлĕхсем те пуррине палăртать.

Суйлава хатĕрленес ĕçре кино пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртса, Перлов юлташ Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Кинофикаци управленийĕн начальникне Трофимов юлташа кадрсем суйласа илес ĕçре çавара карса ларнăшăн хытă критиклет. Трофимов юлташ районти кинофикаци уйрăмĕнче начальник пулса ĕçлеме икĕ хутчен шанăçа тивĕçсĕр çынсене сĕннĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕ Афанасьев юлташ вырăнти Советсен суйлавне хатĕрленес ĕçре пысăк çитменлĕхсемпе йăнăшсем пуррине палăртать. Вăл ку тĕлĕшпе райсовет исполкомĕсемпе ял Совет исполкомĕсем пысăк йăнăшсем тунине нумай тĕслĕхсемпе çирĕплетсе кăтартать.

Афанасьев юлташ малалла нумай районсенче суйлав комиссийĕсем чылайăшĕ ĕçе тытăнманнине палăртать. Уйрăмах Сĕнтĕр районĕнчи суйлав комиссийĕсем хăйсен ĕçĕсене çителĕксĕр туса пырасçĕ. Кунта 27 суйлав участок комиссийĕнчен ĕçе 4 комисси кăна тытăннă. Сĕнтĕрвăрри районĕнче хула Советне суйламалли 35 округ комиссийĕнчен пĕр комисси те ĕçе тытăнман.

Тĕрĕслесе тухнă районсенче чылайăшĕнче ĕçсыннисем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçпе ăнлантару ĕçне çителĕксĕр туса пырасçĕ. Уйрăм ялсенче суйлав хăçан пулассине пĕлмесçĕ, суйлав кунне колхозсенче ирттерекен отчетпа суйлав пухăвĕсен кунĕпе пăтраштарасçĕ. Çавăн пек, Комсомольски районĕнчи Çĕнĕ Шăхран ял Советĕнче ял Совет председателĕ Парков юлташ хăй те суйлав положенине тĕплĕн пĕлмест. Ял Советне суйламалли округ комисси председателĕпе членĕсем те ĕçсынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсене суйламалли положенине пĕлмесçĕ. Тĕрĕсленĕ кун кунта вырăнти Советсене суйламалли положенин пĕр экземплярĕ те пулман. Çавăн пирки те, тет Афанасьев юлташ, суйлавçăсем ĕçсынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен суйлавĕ çинчен пĕлменнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук.

Суйлав умĕнхи ĕçсене ăнăçлă ирттересси материально-техникăллă ĕçсене лайăх хатĕрленнинчен чылай килет. Клубра, агитпунктра сивĕ пулсан, çутă çук пулсан, пăллах, унта суйлавçă пымасть. Партипе совет организацийĕсен палăртнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе васкавлă мерăсем йышăнмалла.

Афанасьев юлташ суйлава хатĕрленес ĕçе мĕнпур министерствăсемпе управленисен тата ведомствăсен активлă хутшăнма кирлине кăтартать. Уйрăммăн илсен, вырăнти топливо промышленность управленийĕн (начальникĕ Стуриков юлташ) мĕнпур агитпунктсем, клубсем, шкулсем, больницăсем валли вутă çителĕклĕ хатĕрлеме тăрăшас пулать. Суту-илÿ министрĕ Малышев юлташ тата Чăвашпотребсоюз президиумĕн председателĕ Балашов юлташ краççын, лампăсем, хĕрлĕ пусма таварсем кÿрсе килесси çине кирлĕ пек пăхман пирки пысăк çитменлĕх тăвасçĕ. Нумай культурăпа сутĕç учрежденийĕсем суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче ĕçсыннисен культурăллă ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе хăйсен ĕçĕсене улăштарса çĕнетмен. Культурăпа сутĕç учрежденийĕсен управлени начальникĕн Костин юлташăн районсенчи культурăпа сутĕç учрежденийĕсене оперативнăрах ертсе пымалла.

Суйлав кунĕнче суйлавçăсен ыйтăвĕсене тивĕçтересси çинчен халех тĕплĕн шутласа пăхас пулать. Апа пулĕмĕсем, буфетсем йĕркелеме тытăнмалла, суйлав кунĕ суйлавçăсене суйлав пунктне илсе пыма транспорт уйăрма çирĕп план тумалла.

Суйлав законĕ тăрăх мĕнпур суйлав участокĕсенче участок комиссийĕсен агитаторсемпе пĕрле суйлавçăсен списокне тĕрĕслес ĕçе организацилемелле. Суйлавçăсен списокне суйлавçăсене кĕртмесĕр хăварни, суйлавçăсен хушамачĕсене пăсса çырни пулмалла мар. Анчах çак ĕç пĕр хутчен тĕрĕсленипе кăна иртмелле мар, ăна суйлавччен туса пымалла. Çĕнĕрен килнĕ суйлавçăсене тата тухса кайнă суйлавçăсене шута илмелле. Суйлавçăсене шута тĕрĕс илнинчен суйлав кунĕнче ĕçсем ăнăçлă пуласси нумай килет.

Вырăнти Советсен суйлавне хатĕрленнĕ май пирĕн республикăра, пĕтĕм çĕршыври пекех, социализмлă ăмăрту анлăн сарăлчĕ. Партипе совет органĕсен, тет Афанасьев юлташ, ĕçсыннисен политикăллă тата ĕçлĕ çĕкленĕвне государство планĕсемпе заданийĕсене ăнăçлăн тултарма мобилизацилемелле. Суйлава хатĕрленнĕ май пуçланнă производствăллă çĕкленĕве шута илсе, хуларипе ялти ĕçсыннисем хушшинче социализмлă ăмăртăва тата анлăрах сармалла.

«Советская Чувашия» хаçат редакторĕ Карташов юлташ хăйĕн сăмахĕнче депутата суйлама тăратнă кандидатсемшĕн агитацилесси çине уйрăмах тимлĕн пăхма кирли çинчен асăрхаттарать.

Пренисенче çавăн пекех Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Кинофикаци управленийĕн начальникĕ Трофимов юлташ, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председатель заместителĕ Андреев юлташ, Чăвашпотребсоюз президиумĕн председателĕ Балашов юлташ тухса каланă.

Сÿтсе явнă ыйту тăрăх пленум тивĕçлĕ решени йышăннă.

Клуб ĕçне вăйлатас пулать

Нумаях пулмасть КПСС Тăвай райкомĕн черетлĕ пленумĕ Тĕмерти клуб заведующийĕ П. А. Баринов юлташ клуб ĕçĕсем çинчен туса панă доклада сӳтсе induced явrĕ.

Пленум Тĕмерти клуб юлашки вăхăтра хăйĕн ĕçĕнче чылай ӳсĕмсем тунине палăртрĕ. Клуб ял Совет исполкомĕ çирĕплетсе панă планпа ĕçлесе пырать. Колхозниксем хушшинче 1952 çулта пурĕ 33 лекципе доклад ирттернĕ. Çав лекцисемпе докладсене пурĕ пилĕк пин çын ытла итленĕ. Клуб организацийĕпе тĕрлĕ ыйтусем тăрăх 137 калаçу ирттернĕ, хаçат-журнал вуласа панă. Колхозниксене тĕрлĕ справкăсем парассине аванлатнă. Çулталăк хушшинче клуб 200 çынна справкăсем тата государство заемĕсен вылявĕсем тăрăх 2.000 çынна облигацисем тĕрĕслесе панă.

Клуб заведующийĕ Баринов юлташ клубри тĕрлĕ ĕçсене хăй тĕллĕн çеç туса пыма тăрăшать. Вăл клуб ĕçне ялти актива, интеллигенцие хутшăнтармасть. Клуб совечĕ иртнĕ çулта пĕр лару кăна ирттернĕ.

Ялта культурăллă вăй пысăк. Вăтам шкулта 22 учитель ĕçлет. Больницăра врачсем тата ытти медицина работникĕсем 8 çын. Участокри ветеринари работникĕсемпе агрономсем те пысăк культурăллă вăй пулса тăраççĕ. Анчах та ку вăйпа клуб çителĕклĕ усă курмасть. Пуçламăш парторганизаципе ял Совечĕ халăха воспитани парас ĕçе çителĕксĕр хутшăнаççĕ. Ялти лекторсен группи начар ĕçленине палăртмалла. Лектори хăйĕн ĕçне плансăр туса пырать. А. Яковлева, Н. Львова, Ф. Кузьмина учительницăсем çулталăк хушшинче пĕр лекци те туман Лекцисене кунта тĕплĕн хатĕрленмесĕр ирттереççĕ. Çулталăк хушшинче тĕне хирĕçле темăсемпе пĕр лекци те ирттермен.

Клуб çамрăксен ыйтăвĕсене тивĕçтерес енĕпе те çителĕксĕр ĕçлет. Клуб çумĕнчех вулав çурчĕ пур. Унта тĕрлĕ кĕнекесем нумай. Анчах та çав кĕнекесене, шкул ачисемсĕр пусне, колхозниксемпе ялти актив сахал вулаççĕ. Клуб вулакансен конференцийĕсене пурĕ те икĕ хут кăна ирттернĕ.

Клуб физкультурăпа спорт кружокĕсен ĕçне йĕркелемен. Кунта тĕрлĕ ăмăртусемпе кроссем пĕрре те пулман, спорт площадкине те туман.

Клуб çумĕнче ташă, юрă, тĕрĕ тума вĕренмелли кружоксем те çук.

А. АЛЕКСЕЕВ.

Стена хаçачĕ пулăшнипе

Сĕнтĕр районĕнчи Свердлов ячĕпе тăракан колхозра «Вăйлă тырпулшăн» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать. Ăна уйăхра виçĕ хут кăларатпăр. Сураки ирттернĕ тата тырпул пухса кĕртнĕ кунсенче икĕ кунта пĕр номер кăлартăмăр.

Хаçатăн содержанийĕ витĕмлĕ пултăр, ăна кăларас ĕçе колхоз активĕ хастарлă хутшăнтăр тесе, хаçат тухас умĕн рейд ирттеретпĕр. Хăле кĕнĕренпе сакăр хутчен рейд ирттертĕмĕр.

Нумаях пулмасть ялкорсен бригади колхозра ялхуçалăх машинисене мĕнле пуçтарса лартнине тĕрĕслерĕ. Тĕрĕсленĕ хыççăн хăшпĕр машинăсем уйрах, юр айĕнчех выртса юлни палăрчĕ. Сăмахран, пĕрремĕш бригадăн жнейки ялтан çур çухрăмра, суртырри уйĕнчех ларнă пулнă. Хаçатра карикатура туса заметка кăлартăмăр. Çакăн хыççăн ситменлĕхсене кĕске вăхăт хушшинчех пĕтерчĕç.

Ялкорсен бригади колхозра ĕç лашисене мĕнле пăхнине тĕрĕслесе тухнă хыççăн виççĕмĕш бригада конюхĕсем лашасене кирлĕ пек пăхманни, иккĕмĕш бригадăри конюхсем ĕç лашисене выртма улăм сарса паманни палăрчĕ. Çак ситменлĕхсем çинчен те хаçатра çырса кăлартăмăр. Конюхсем хăйсен ситменлĕхĕсене часах тӳрлетрĕç.

Пĕррехинче ялкорсен бригади виççĕмĕш бригада итемĕ çинче юр айне пулнă сӳс çурăмĕсене асăрхарĕ. Чавса кăларса шута илнĕ хыççăн кунта пĕтĕмпе 2.500 çурăм çапман кантăр пулни палăрчĕ. Редколлеги кун çинчен ревизи комиссине пĕлтерчĕ. Ыйтăва правлени ларăвĕнче сӳтсе явнă хыççăн, ситменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мера йышăнчĕç.

Колхозниксем хăйсен хаçатне юратса вулаççĕ. «Вăйлă тырпулшăн» хаçат ĕç дисциплинине пăсакан, начар ĕçлекен çынсене питленипе пĕрлех, колхоз производствинче малта пыракан, обществăллă хуçалăха тĕреклетессишĕн хастарлă кĕрешекен колхозниксем çинчен те час-часах çырать.

Редколлеги çирĕп план тăрăх ĕçлет. Хаçата çырса тăракансем хушшинче пионерсенчен пуçласа 60—70 çулхи ватă колхозниксем те пур.

Колхозниксем хаçата юратса вулатчăр тесе, кашни номерех 12—15 заметка тата карикатурăсем кĕртетпĕр. «Бригадăсенчи хыпарсем», «Партипе комсомол пурнăçĕ», «Юнашар колхозра», «Çамрăк мичуринецсен кĕтесĕ», «Хаçатра çырнă хыççăн», «Кулăш кустăрми» т. ыт. ятлă пайсем пур. Хаçат çинчех «Хисеп хăми», «Кăтарту хăми», «Сводка» çырса кăларатпăр.

Хаçата çырса тăракан колхозниксен хисепĕ ӳссех пырать. 1952 çулта пĕтĕмпе 38 номер тухрĕ. Çав хаçатсенче эпир 78 колхозникăн 294 çырăвне çырса кăлартăмăр.

«Вăйлă тырпулшăн» хаçат тухма пуçланăранпа 16 çул иртрĕ. Çак вăхăт хушшинче вăл 500 номер ытла тухрĕ. Кăçал çулталăк хушшинче 75 номертен кая мар кăларма палăртрăмăр.

Г. СЕРГЕЕВ,
«Вăйлă тырпулшăн» хаçат редакторĕ.

Техникăллă культурăсем акса тăвас ĕçе лайăхлатса пырассишĕн кĕрешер!

Техникăллă культурăсем акса тăвас ĕçе вăйлатмалла

Партипе правительство техникăллă культурăсем акса тăвас ĕçе пысăка хурса хаклаççĕ. Партин XIX-мĕш съезчĕ пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче ку ĕçе анлăн механизацилеме палăртнă. Сăмахран, йĕтĕн акса тăвассине, ăна пухса кĕртессине 1955 çулта 80—90 процент механизацилемелле. Государство техникăллă культурăсем акакан колхозсене удобренисем çителĕклĕ парса пулăшать, ытти çăмăллăхсем те нумай парать.

Анчах та йĕтĕн тата кантăр акса тăвас ĕçре ситменлĕхсем нумай-ха. Республикăн Ялхуçалăх министерстви техникăллă культурăсем акса тăвас тата тирпейлес ĕçсене механизацилесси çине тимлĕн пăхмасть. Халĕ машина-трактор станцийĕсенче йĕтĕн акмалли сеялкăсемпе йĕтĕн татмалли машинăсем пурĕ те 21 çеç. Ытти ĕçсене тума кирлĕ машинăсем çукпа пĕрех. Паллă ĕнтĕ, ал вĕççĕн ĕçленипе техникăллă культурăсен тухăçлăхне ӳстерсе пыма çук. Ялхуçалăх министерствин машинăсем илсе килмелли плансене тĕплĕнрех шухăшласа тумалла.

Пĕлтĕр республикăна йĕтĕн сӳсĕ хатĕрлеме икĕ агрегат илсе килнĕ. Вĕсем кашнийех 300 гектар çинчен пухса кĕртнĕ йĕтĕне сӳс туса пама пултараççĕ. Анчах иртнĕ çулта çав агрегатсене ĕçе ярайман. Ялхуçалăх министерствин кăçал агрегатсене ĕçлеттермелле тума халех мерăсем йышăнас пулать.

Чылай районсемпе колхозсенче кантăра тата йĕтĕне халĕ те тивĕçлипе хаклаççĕ. Малта пыракан колхозсенче çак культурăсенчен пысăк тупăш илеççĕ пулсан, нумай ялхуçалăх артелĕсенче вĕсен тухăçлăхне ӳстерме тăрăшмаççĕ. Сăмахран, Пăрачкав районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз çулсерен 13 гектар йĕтĕн акса хăварать. Анчах вăл 1950—1951 çулсенче государствăна пĕр килограмм та сӳс парайман, иртнĕ çулта та сахал панă. Çапла вара, колхоз çуллен вăрлăх, ĕçкунĕ нумай пĕтерет, усă курас вырăнне, тăкак анчах тӳсет.

Йĕтĕн чылай акакан Кувакино районĕнчи колхозсенче пысăк ситменлĕхсем пур. Улттăмĕш уйăх ĕнтĕ кунта йĕтĕне хăвăртрах çапса пĕтересси çинчен калаççĕ, решенисем те йышăнаççĕ, анчах 100 гектар çинчен татса кĕнĕ йĕтĕне халĕ те çапман-ха. Асăннă районти «Победа» колхозра йĕтĕн нумай пĕтнĕ, мĕншĕн тесен ăна машинăпа татнă хыççăн икĕ уйăх хушши никам алли те пырса тĕкĕнмен, вăл сыхмасăр выртнă. Йĕтĕн çĕрнĕ, пусĕсем сапаланса кайнă.

Хăшпĕр колхозсенче пухса кĕртнĕ йĕтĕне государствăна типтерлесе пама тăрăшмаççĕ. Первомайски районĕнчи «Новая сила» ялхуçалăх артелĕнчен Т. Мурчин колхозника Миренски завода икĕ лав йĕтĕнпе янă. Йĕтĕн ытлашши нӳрĕ пулнă, заводра ăна типĕтме хушнă. Анчах Мурчин, типĕтес вырăнне «çĕнĕ меслет» тупнă. Вăл заводран икĕ километр кайнă та йĕтĕне сунтарса янă. Çапла вара, ун айăпĕпе колхоз пин тенкĕ ытла тăкак курнă.

Кантăр продукци хатĕрлес ĕçре те ситменлĕхсем нумай. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Йĕпреç, Комсомольски, Октябрьски, Сĕнтĕр, Чурачăк, Шăмăршă, Шăхасан тата Тăвай районĕсем юлса пыраççĕ.

Йĕпреç районĕ январĕн 20-мĕшĕ тĕлне кантăр сӳсĕ памалли плана пĕтĕмпе те 29 процент, кантăр вăрри хатĕрлемелли плана 33 процент ытларах кăна тултарнă. «Заря», «Правда», Мичурин ячĕпе тăракан, «Красный урожай», Молотов ячĕпе тăракан колхозсем темиçе çул хушши ĕнтĕ государствăна кантăр сӳсĕ паман. Октябрьски районĕнче кантăр сӳсĕ пама 9 колхоз, кантăр вăрри пама 19 колхоз халĕ те хутшăнмаççĕ.

Сĕнтĕр районĕ кантăр акса тăвас тĕлĕшпе республикăра виççĕмĕш вырăн йышăнать. Анчах районта кантăр тухăçлăхĕ чакса пырать. Жданов ячĕпе, Калинин ячĕпе тăракан тата ытти хăшпĕр колхозсенче иртнĕ çул 180 гектар çинчи пусана татман.

Сураки валли кантăрпа йĕтĕн вăрри çителĕклĕ хатĕрлессишĕн кĕрешмелле. Нумай районсенче ку ĕçе пачăх та хакламаççĕ. Вăрмар районĕнче кантăр вăрри пĕтĕмпе те 22 процент анчах хатĕрленĕ. Çĕрпӳ, Чкаловски, Пăрачкав, Кувакино районĕсенче те ĕç çавăн майлах.

1953 çулта йĕтĕн тата кантăр акса тăвас ĕçе пур колхозсенче те тĕпрен лайăхлатмалла. Акмалли плана тултарас, техникăллă культурăсен тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе Ялхуçалăх министерствипе унăн вырăнти органĕсен халех тивĕçлĕ мерăсем йышăнас пулать. Чи малтан, иртнĕ вăхăтсенче пулнă ситменлĕхсене вĕçне çитиех пĕтермелле, йĕтĕн-кантăр акакан пур колхозсене те малта пыракан колхозсем пек ĕçлеме вĕрентмелле.

Ялхуçалăх министерствипе Чăваш АССР Госпланĕ хăш районсенче техникăллă культурăсем мĕн чухлĕ акмаллине тĕрĕс татса пама тивĕçлĕ. Халлĕхе ку тĕлĕшпе ситменлĕхсем пур-ха. Планланă чухне йĕтĕн-кантăра типтерлесе хатĕрлекен заводсем ăçта вырнаçнине те шута илес пулать.

Ялхуçалăх специалисчĕсемпе колхоз руководителĕсен йĕтĕне тата кантăра пусă çаврăнăшĕнче вырнаçтарас ыйтăва пĕлсе татса памалла. Ку таранччен нумай колхозсенче вĕсене тĕлли-паллисĕр, пусă çаврăнăшне пăхăнмасăр, агротехникăна пăсса акнă, акнă участоксене звеносем çумне çирĕплетсе паман. Хуçасăрлăха пула тăкаксем сахал мар пулнă.

Хăватлăн аталанса пыракан халăх хуçалăхне йĕтĕн тата кантăр продукцийĕ нумайрах та нумайрах кирлĕ пулаççĕ. Ял ĕçченĕсен Тăван çĕршыв ыйтнине пĕтĕмпех туса памалла.

Г. СТРЕЛЬНИКОВ,
Главзаготленăн Чăваш республикинчи кантурĕн управляющийĕ.

Кантăр акса тăвас тĕлĕшпе малта пыракансем

ЕЛЧĔК РАЙОНĔ ТĂРĂХ

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 1952 çулта 30 гектар кантăр акнă. Унăн план тăрăх государствăна пиллĕкмĕш номерлĕ кантăр сӳсĕ 43,5 центнер, кантăр вăрри 63 центнер памалла. Паянхи куна колхоз 6,5 номерлĕ сӳс 60,5 центнер, 145 центнер е кашни гектар пуçне 483 килограмм ытла кантăр вăрри панă. Государствăна хатĕрлесе памалли кантăр татах та нумай.

Колхоз паянхи кун тĕлне кантăршăн государствăран 218 пин тенкĕ укçа, 490 центнер тулă, 38 центнер жмых, 280 килограмм ӳсентăран çăвĕ илнĕ. Кантăра пĕтĕмпех парса пĕтернĕ хыççăн унтан илекен тупăш 500 пин тенкĕрен иртмелле.

Çапла вара, кашни гектар çинчен пухса кĕртнĕ кантăр колхоза 16 пин тенкĕ ытла тупăш парать.

Свердлов ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулта 31 гектар кантăр пухса кĕртнĕ. Кантăр хатĕрлесе памалли плана 124 процент, кантăр вăрри памалли плана 120 процент тултарнă.

Кантăр продукцийĕшĕн колхоз государствăран укçа, тулă, жмых, çу нумай илнĕ.

ВĂРМАР РАЙОНĔ ТĂРĂХ

«Маяк» колхоза 18 гектар çинчен пухса кĕртнĕ кантăр 97 пин тенкĕ тупăш панă. Государствăна продукци памалли плана чылай ирттерсе тултарнă.

КОМСОМОЛЬСКИ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

«Дружба» колхоз пĕлтĕр 12 гектар кантăр акса тунă. Вăл кантăр сӳсĕ хатĕрлесе памалли обязательствăна икĕ хут ытла ирттерсе пурнăçланă.

Кантăртан илекен тупăш колхоз хуçалăхĕнче чылай пысăк вырăн йышăнать.

Йĕтĕн акса тăвас тĕлĕшпе малта пыракансем

УЛАТĂР РАЙОНĔ ТĂРĂХ

«Победа Октября» колхоз. Иртнĕ çулта колхоз 30 гектар йĕтĕн акнă. Государствăна тылламан йĕтĕн памалли плана 329 процента яхăн, йĕтĕн вăрри памалли плана 1.050 процент тултарнă.

Ялхуçалăх артелĕ йĕтĕн продукцийĕнчен пĕтĕмпе 207 пин тенкĕ тупăш илнĕ. Колхоза государство 315 центнер тулă, 1.170 килограмм ӳсентăран çăвĕ, 4.900 килограмм жмых панă.

Вăтам шутпа колхоз йĕтĕн акнă кашни гектартан 7.000 тенке яхăн тупăш илнĕ.

«Победа» колхоз пĕлтĕр 24 гектар çинчен тухăçлă йĕтĕн пухса кĕртнĕ. Вăл йĕтĕн хатĕрлесе памалли плана 116 процент ытла, йĕтĕн вăрри памалли плана 1.387 процент тултарнă.

Колхоз йĕтĕнрен пĕтĕмпе 100 пин тенке яхăн тупăш илнĕ.

«Путь Ильича» колхоз 1952 çулта 45 гектар йĕтĕн акса тунă. Тăван çĕршыва йĕтĕн памалли плана 267 процент, йĕтĕн вăрри памалли плана 364 процент тултарнă.

Колхоз йĕтĕн продукцийĕ панăшăн государствăран укçа, тулă, çу тата жмых нумай илнĕ.

ВĂРНАР РАЙОНĔ ТĂРĂХ

Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз иртнĕ çул малтанхи хут 15 гектар йĕтĕн акнă. Государствăна йĕтĕн памалли плана 253 процент, йĕтĕн вăрри памалли плана 1.224 процент тултарнă. Вĕсенчен пĕтĕмпе 145 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

Йĕтĕн акнă кашни гектартан илнĕ тупăш 9.000 тенкĕрен иртет.

ЕТĔРНЕ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

Буденный ячĕпе тăракан колхоз государствăна йĕтĕн памалли плана 284 процент, йĕтĕн вăрри памалли плана 390 процент тултарнă.

Тухăçлă йĕтĕн

Пăрачкав районĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕ 1952 çулта пысăк тухăçлă йĕтĕн туса илчĕ. 19 гектар çинчен вăтам шутпа кашни гектартан 8 центнер йĕтĕн вăрри, 7 центнер сӳс тухнă. Йĕтĕн продукцине государствăна парса колхоз 100 пин тенкĕ ытла укçа, 150 центнер тырă, 15 центнер жмых илчĕ. Кунсăр пуçне колхоза тырă хатĕрлемелли плана 30 процент чакарса панă.

Колхозра йĕтĕн-долгунец пысăк тухăçлă пулни агротехникăллă ĕçсен мĕнпур комплексне тĕплĕн пурнăçласа пынинчен килнĕ. Артель председателĕ М. Хайлов юлташ ертсе пынипе кунта курăк акса тумалли çĕр ĕçĕ системине тимлĕн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Тырпул туса илмелли вунă уйлă тата выльăх апачĕ туса илмелли сакăр уйлă пусă çаврăнăшĕсем тунă. Пусă çаврăнăшĕсенче нумай çул ӳсекен курăксем çителĕклĕ акаççĕ.

Йĕтĕн акмалли участока предплужниклă трактор плугĕпе 25 сантиметр тарăнăш кĕрхи çĕртме тунă. Нӳр ытларах тытса юлас шутпа çуркунне ирех участока сӳреленĕ, унтан вара 4—5 сантиметр тарăнăш культиваци тунă.

Акас умĕн йĕтĕн вăрлăхне лайăх тасатса хатĕрленĕ. Ăна малтан льнотрещетка, унтан йĕтĕн аллакан триер витĕр кăларнă. Акас умĕн вăрлăха имсамланă.

Горький ячĕпе тăракан колхоз «Йĕтĕн-долгунец — 262» сорт акать. Ăна пĕлтĕр пĕтĕмпех хĕреслĕ майпа акнă, гектара 1,2 центнер вăрлăх кĕртнĕ.

Калча шăтса тухсан, кашни гектар пуçне 1,5 центнер аммиак селитрипе апат панă, çумкурăксенчен тасатсах тăнă.

Йĕтĕне саралса çитсен пĕр тăкаксăр пухса кĕртнĕ. Типнĕ хыççăн çийĕнчех çĕр çине сарса тухнă. Çакă вăл йĕтĕн продукцине государствăна срокчен парса татма, кăçал акма паха вăрлăх хатĕрлеме май панă.

Йĕтĕн промышленноçть валли хаклă чĕртавар пулса тăнине тата вăл колхоза пысăк тупăш панине шута илсе, кăçал Максим Горький ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕ ăна 30—35 гектар акма палăртать.

Н. ЛАЗАРЕВ,
районти ялхуçалăх пайĕн главнăй агрономĕ.

Юр тытаççĕ

СĔМĔРЛЕ. «Заря» колхоз юр тытмалли плана тултарчĕ. Колхозниксем 120 гектар ыраш, 16 гектар кĕрхи тулă, 22 гектар клевер çинче юр тытса хăварчĕç.

А. КУРБАКОВ.

Колхозниксен вĕренĕвне лайăх йĕркелемелле

КОМСОМОЛЬСКИ. Иртнĕ хĕлте «Гигант» колхозра зоотехника курсĕнче 28 колхозник вĕренчĕ. Курса Е. Михайлова зоотехник ертсе пычĕ. Вĕренсе пынине колхозниксем фермăсенчи практикăллă ĕçпе çыхăнтарса пычĕç. Вĕренекенсем итоглă занятире выльăх-чĕрлĕх пăхас тĕлĕшпе çирĕп пĕлӳ кăтартрĕç.

Анчах кăçал колхозра колхозниксен вĕренĕвне ку тарана çитсе те йĕркелесе яраймаççĕ. Ферма работникĕсен курсра виççĕмĕш çул вĕренсе ялхуçалăх ĕçĕнчи пĕрремĕш класри мастерсен ятне илмелле Курса ертсе пыракан Е. Михайлова юлташ кăçал хăйĕн ĕçне чакарчĕ, пурĕ те виçĕ занятие кăна ирттернĕ. Колхоз правленийĕ те курс ĕçĕпе интересленмест.

Агротехникăна вĕренмелли курс вара иртнĕ хĕлле те тивĕçлипе ĕçлемерĕ, кăçал вăл пĕр занятие те ирттермен-ха. Районти ялхуçалăх пайĕн ку ĕçе тивĕçлипе ертсе пымалла.

С. СИДОРОВ.

Ревизи комиссисен ĕçне лайăхлатассишĕн

Районти колхозсем иртнĕ çулта тунă ĕçсен итогĕсене пăхса тухма хатĕрленеççĕ. Ку тапхăрта колхозсенчи ревизи комиссийĕсен пĕлтерĕшĕпе ответлăхĕ уйрăмах пысăк. Вĕсен колхозсен çулталăк хушшинчи пĕтĕм хуçалăх ĕçне тата укçа-тенке мĕнле тыткаланине тĕплĕн тĕрĕслесе тухмалла. Çавăн пекех колхоз правленийĕсен çулталăкри отчечĕсем тăрăх хăйсен заключенийĕсене памалла.

Иртнĕ çулта колхозсенчи парторганизацисемпе ревизи комиссийĕсем колхозсен пурлăхне сыхласа упрас, артель Уставне пăснисене тӳрлетес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем турĕç. Районти 15 колхозра 7 гектар çĕр, 8 центнер аш-какай, 40 центнер тырă, 12.355 тенкĕ укçа, законсăр тытса илнĕ тата ытти пурлăха колхозсене тавăрса панă.

Андреев ячĕпе тăракан тата «Авангард» колхозсенче контроль ĕçне аван йĕркеленĕ. Колхоз правленийĕсен ĕçне артель Уставĕнче кăтартнă вăхăтра тĕрĕслесе тăнă. Ревизи акчĕсене колхозниксен пухăвĕсенче сӳтсе явса çирĕплетнĕ. Асăннă колхозсенче ялхуçалăх артелĕн Уставне тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Çакă вăл государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçлама, артельсен тупăшне ытларах ӳстерме май панă.

Анчах ревизи комиссийĕсем пур колхозсенче те çавăн пек йĕркеллĕ ĕçлеççĕ теме çук-ха. Халĕ, çулталăк вĕçленнĕ тата хуçалăх ĕçĕсен итогĕсене тунă вăхăтра, вĕсен япăх ĕçĕ ытларах палăрать. Максим Горький ячĕпе, Мичурин ячĕпе тăракан тата «Красный партизан» колхозсенчи ревизи комиссийĕсем артельсен ĕçĕсене çулталăк хушшинче пурĕ те пĕрер хутчен кăна тĕрĕслесе тухнă. Жданов ячĕпе тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенче вара ревизи тумалли вăхăта пăснă кăна мар, ревизи комиссийĕн акчĕсене колхозниксен пухăвĕсенче сӳтсе явмасăрах çĕлесе хунă. Шверник ячĕпе тăракан колхозра ревизи комиссийĕ саланса кайнă. Контроль ĕçне вăйсăрлатни артель Уставне хытă пăсасси патне илсе пынă.

Малта асăннă Шверник ячĕпе тăракан колхозра, артель председателĕ И Мартынов коммунист партипе государство дисциплинине тытса пыманнине пула, артель хуçалăхне вуншар пин тенкĕ сиен кӳнĕ. Апла пулсан та айăплисене ку таранччен ответ тыттарман, колхоза кӳнĕ сиеншĕн вĕсенчен шыраса илмен.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ А. Моисеев артеле ертсе пырас ĕçе вăйсăрлатнă, ĕç дисциплинине хытă хавшатнă. Çакă вăл хăшпĕр ĕçлĕ сынсене артель хуçалăхне сиен кӳме май панă.

Ку колхозри Г. Петухов бригадир тырпул пухса кĕртнĕ, государствăна тырă панă вăхăтра бригадăри ĕçсене пăрахса, сутă туса сӳренĕ Бригада 1,83 гектар çинчи çĕрулмине кăлармасăр шăнтса янă, шыва хутнă 1.475 çурăм кантăра пăр айне хăварнă.

Колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлес тĕлĕшпе хытă юлса пырать. Авăн çапса пĕтермен, ытти ĕçсене те туса çитермен. Чылай колхозниксем ĕçе тухма пăрахнă, мĕншĕн тесен кунта ялхуçалăх продукчĕсене ĕçкунĕсем тăрăх тата кам мĕнле ĕçленине кура валеççе парас йĕркене хытă пăснă. Колхоз счетовочĕ пулнă З. Сидоров колхозниксен ĕçкунĕсене шута илмесĕрех 56 центнер тырă, 4.336 тенкĕ укçа валеççе, салатса янă. Çавăн пекех колхозниксене итем çинчен висмесĕрех 349 килограмм тырă витрепе валеççе панă. Итем çинчи улăма кам мĕнле пĕлет, çавăн пек киле йăтаççĕ. Кун пек майсемпе ĕçе тухман колхозниксем ытларах усă кураççĕ.

Колхоз председателĕ Моисеев колхозри йĕркесене кăна мар, государство дисциплинине те хытă пăсать. Ку тарана çитсе те колхоз государствăна 104 центнер тырă, 148 центнер çĕрулми, 1.165 литр сĕт парса татман.

Колхозри ревизи комиссийĕн председателĕ Ягронин артель Уставне, государство дисциплинине пăсакансене, колхоз пурлăхне чăрсăррăн салатакансене хирĕç кĕрешмест, йăлине тăвас шутпа, пĕчĕк ситменлĕхсем çинчен актсем çырнипех лăпланать. Парторганизаци секретарĕ А. Сироткин юлташ вара Моисеевпа Ягронин юлташсен тимсĕрлĕхĕпе килĕшсе пырать.

«Красное Сормово» тата Куйбышев ячĕпе тăракан колхозсенчи ревизи комиссийĕсем пирки те çавнах каламалла. Ку колхозсенче, ĕç дисциплинине вăйсăрлатнине пула, авăн çапас ĕçе кая хăварнă. Халĕ вара колхоз руководителĕсем çак йăвăрлăхран тухмалли çăмăл меслет тупнă: авăн çапма тухман колхозниксене итем çинчен ним висесĕрех улăм парса ĕçе явăстараççĕ. Çапла майпа выльăх апачĕ нумай салатса пĕтернĕ. Анчах колхозсенчи ревизи комиссийĕсем тырпула тăккаланине, выльăх апатне вырăнсăр салатса пĕтернине хирĕç кĕрешес вырăнне, пĕчĕк кăлтăксемпе «чăрманса» лараççĕ, пысăк ситменлĕхсене асăрхамасăр хăвараççĕ.

Артель Уставне хытă пăснисене хирĕç ревизи комиссийĕсем çителĕксĕр кĕрешнĕшĕн, чи малтанах, районти ялхуçалăх пайĕ тата унăн инструктор-бухгалтерĕсем айăплă. Вĕсем ревизи комиссийĕсен ĕçне аванлатас, тĕрĕс ĕçлеме вĕрентес тĕлĕшпе нимех те туман. Колхозсенче çулталăкри ревизипе инвентаризаци пуçланас умĕн те ревизи комиссийĕн председателĕсемпе семинар ирттермен. Районти 15 колхозра ку тарана çитсе те ревизи комиссийĕсем ĕçе тытăнман, 9 колхозра кăна инвентаризаци комиссийĕсем хăйсен ĕçне туса пĕтернĕ. Ялхуçалăх пайĕн аслă инструктор-бухгалтерĕ К. Арсентьев юлташ ревизи комиссийĕсем чăннипе мĕнле ĕçленине пачах пĕлмест.

Колхозсенчи ревизи комиссийĕсен ĕçне аванлатас тĕлĕшпе райсовет исполкомĕ те нимех те тумасть, вĕсен отчечĕсене итлемест, ревизи тунă актсене пăхса тухса çирĕплетмест.

Ревизи комиссийĕсем — колхозсенчи обществăллă контроль органĕсем. Вĕсем колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетсе пырас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Ялхуçалăх органĕсен, райсовет исполкомĕн тата колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен ревизи комиссийĕсене куллен ертсе пымалла, вĕсен ĕçне лайăхлатма пулăшмалла.

Г. СПИРИДОНОВ,
КПСС Советски райкомĕн ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ.

Редакцие килнĕ çыру

Ĕçри йĕркесĕрлĕхсем

1952 çулта хамăр йышăннă обязательствăсене эпир пурнăçлаймарăмăр. Вăхăтра тирпейлĕ ĕçлеме май пулнă çĕртех, пирĕн Буденный ячĕпе тăракан колхозра йĕркесĕрлĕхпе тирпейсĕрлĕхсем нумай пулни колхозниксене ĕçлеме чăрмантарать. Çавна пула эпир халĕ те авăна çапса пуçтараймарăмăр. Бригадирсем ĕçе вăхăтра йĕркелесе пыманнине пулах виçĕ гектар çинчи вир çĕрсе пĕтрĕ. Пурлăха сая янăшăн никама та ответ тыттарманни колхозниксене тарăхтарать.

Иртнĕ çуркунне пирĕн колхоз 16 пин тенкĕ парса автомашина туянчĕ. Машинăна тирпейсĕр тыткаларĕç, вăл 4—5 уйăх сӳресенех юрăхсăра тухрĕ. Хаклă машина çавăнтанпа кĕркунне çумăр айĕнче ларчĕ, халĕ ĕнтĕ юр айĕнче тутăхса ларать.

Правлени колхозăн ытти машинисем çине те чунсăррăн пăхать. Плугсем, сеялкăсем, сӳресем, жнейкăсем, урапасем кĕркунне кам ăçта пăрахнă, çавăнтах выртаççĕ. Ут таврашĕсем çухалса пĕтрĕç. Колхоз председателĕ И. Никитин юлташ, бригадирсем Н. Лаврентьев, Н. Курбатов, П. Петров юлташсем колхозниксен сăмахне хисеплемеççĕ, кăтартнăшăн çиленеççĕ.

Ĕçе куллен кирлĕ пек йĕркелесе пыман пирки пирĕн колхоз халĕ вăрман хатĕрлевĕнче юлса пырать. Кашни бригадăрах туртăм вăйĕ çителĕклĕ. Анчах çав вăйпа çителĕклĕ усă курмаççĕ.

В. МИХАЙЛОВ,
Калинино районĕ.

„Коммунизм ялавĕ" хаçатра çырнă хыççăн

„Çĕмĕрле вăрманпромхозĕнче ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн кĕрешмеççĕ"

КПСС Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕ М. Кузьмин тата Çĕмĕрле вăрманпромхоз директорĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ Т. Тарасов юлташсем «Коммунизм ялавĕ» хаçатра иртнĕ çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнче пичетленнĕ «Çĕмĕрле вăрманпромхозĕнче ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн кĕрешмеççĕ» ятлă статьяра ситменлĕхсене тивĕçлипе критиклени çинчен пĕлтерчĕç.

Парти райкомĕн бюровĕ вăрманпромхоз директорне Рожков юлташа ситменлĕхсене кĕске вăхăтра пĕтермесен ответ тыттарасси çинчен астутарнă, ОРС начальникне Триковский юлташа вăрманта ĕçлекенсем валли куллен кирлĕ таварсемпе апат-çимĕç продукчĕсем вăхăтра кӳрсе килменшĕн асăрхаттарнă, вăрманпромхозри партбюро секретарĕ Тарасов юлташ вăрман хатĕрлекенсем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе тивĕçлипе туса пыманнине палăртнă.

Хаçатра пичетленнĕ çак статьяна вăрманпромхозри партбюро ларăвĕнче сӳтсе явнă. Партбюро Мисчĕ вăрман участокĕн начальникне Солдаткин юлташа тата вăрман участокĕнчи парторганизаци секретарьне Асянин юлташа вăрман касакансен ĕçне тата массăллă-политикăллă ĕçе тивĕçлипе организацилеменшĕн асăрхаттарнă.

Статьяра асăннă ситменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе мерăсем йышăннă.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ Сĕнтĕр районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхозра ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсни, М. Коляков юлташ ертсе пыракан бригада çĕрулми кăларса пĕтерменни, А. Пайкова юлташ бригади 0,40 гектар çинчи кунăстана пухса кĕртмесĕр шăнтса яни çинчен çыру килнĕччĕ.

Сĕнтĕр районĕн ялхуçалăх пайĕ çырăва тĕрĕслесе тухса, çапла пĕлтерчĕ:

Жданов ячĕпе тăракан колхозри иккĕмĕш бригада бригадирĕ Коляков çĕрулми кăларнă вăхăтра хăй ирĕкĕпе Атăл тăрăх сӳреме тухса кайнă, хăй вырăнĕнче ĕçлеме, правленипе килĕшмесĕрех, хăйĕн йăмăкне А. Коляковăна шанса хăварнă. Анчах унăн йăмăкĕ ĕçе тивĕçлипе организацилеймен, çакна пула 0,25 гектар çинчи çĕрулми шăнса юлнă.

А. Пайкова юлташ бригади 0,40 гектар çинчи кунăстана шăнтса янă, кунăста вырăнĕсене ситерме çеç юрăхлă пулнă.

Колхозра ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсни çинчен колхоз членĕсен тата парторганизацин усă пухăвĕсенче, КПСС райкомĕн бюровĕнче сӳтсе явнă. Иккĕмĕш бригада бригадирне Колякова 0,25 гектар çинчи çĕрулмие шăнтса ярса колхоза сиен кӳнĕшĕн ответ тыттарма, унтан çĕрулми хакĕ чухлĕ шыраса илме йышăннă.

* * *

Шупашкар районĕнчи «Красный герой» колхоз председателĕ пулнă А. Кузьминпа кладовщик В. Осипова 2 пин килограмм тырă приход тумасăр склада хуни тата ытти ситменлĕхсем çинчен çырнă заметкăна «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ Шупашкар районĕн ялхуçалăх пайне янăччĕ.

Ялхуçалăх пайĕ пĕлтернĕ тăрăх, заметка авторĕ ситменлĕхсене тĕрĕс кăтартса панă. 2.000 килограмм тырă вăрлама тăнă çынсене ответ тыттарас шутпа ĕçе халăх судне пама йышăннă. Колхоз председателĕнчен Гавриловран, ферма заведующийĕнчен Григорьевран колхоза сиен кӳнĕшĕн укçа шыраса илмелле тунă.

Тĕнчери лару-тăру

ИТАЛИРИ РЕАКЦИН СУЙЛАВ УМĔНХИ МАНЕВРĔСЕМ

Италире депутатсен палатин реакциллĕ ытларахăшĕ январĕн 21-мĕшĕнче суйлав системин «реформи» çинчен закон проектне йышăннă. Вăл проекта де Гаспери правительстви 1952 çулхи октябрьте тăратнă пулнă. Мĕне пĕлтерет-ха çак «реформа»? Малтанхи йĕркепе депутатсен мандачĕсене демократиллĕ система тăрăх валеçнĕ: кашни партиех, суйлавра пухнă сасăсен хисепне кура, пропорциллĕ йĕркепе депутатсен мандачĕсене илнĕ. Халĕ вара çакăн пек системăна мажоритарнăй системăпа—ытларахăш сасă пухнă партие «преми» памалли йĕркепе улăштараççĕ. Çĕнĕ закон тăрăх парти е пĕр блока пĕрлешнĕ партисен ушкăнĕ, вăл суйлав вăхăтĕнче мĕнпур сасăсенчен 50 процент ытларах пĕр сасă кăна илсен те, парламентри вырăнсенчен 65 процентне йышăнать. Урăхла каласан парламентра çав партин ытларахăш сасă пулать. Ытти партисем вара суйлав вăхăтĕнче, сăмахран, мĕнпур сасăсенчен 49,99 процентне пухсан та, парламентра чылай сахал вырăн илеççĕ.

Италири влаçра тăракан ушкăнсем çавăн пек закона кама хирĕç йышăннине ăнланса илме йывăр мар. Италири реакциллĕ тăватă парти—христианла демократсен, социал-демократсен, либералсен тата республиканецсен партийĕсем, — суйлав системин «реформишĕн» питĕ хытă тăрăшнăскерсем, çитес суйлавра депутата суйламалли кандидатсен пĕрлĕхлĕ списокне тăратасси çинчен килĕшӳ çине алă пуснă ĕнтĕ. Демократие хирĕçле çĕнĕ суйлав законĕ çине таянса, Италири влаçра тăракан ушкăнсем суйлав хыççăн депутатсен палатинче ытларахăш сасă илессишĕн, реакциллĕ ушкăнсен интересĕсене хӳтĕлекенсене парламентра нумайрах вырăн парасшăн. Вĕсем çав вăхăтрах демократиллĕ партисене, чи малтанах коммунистсен партине, вăл партисемшĕн нумай суйлавçăсем сасăлаççĕ пулсан та, парламентра сахалтарах вырăн парасшăн. Урăхла каласан, ĕççыннисен законлă представителĕсене парламентран хĕссе кăларасси çинчен сăмах пырать.

Италири демократиллĕ ушкăнсем çакна кăтартса параççĕ: çавăн пек майпа Италири реакци демократиллĕ ирĕклĕхсен юлашкисене пĕтерме тата çĕршыва фашизацилессине хăвăртлатма мĕнпур чăрмавсенчен хăтăлма хăтланать. Правительство пичет тата профсоюзсен ирĕклĕхĕсене хирĕç, демократиллĕ партисен политикăллă ĕçне хирĕç туса ирттерекен мероприятисене ырласси çинчен реакциллĕ тăватă парти пĕр-пĕринпе калаçса татăлнă.

Италири влаçра тăракан ушкăнсем демократие хирĕç тăвакан ĕçсем Америкăн агрессиллĕ планĕсемпе тӳрремĕнех çыхăнса тăраççĕ. Италире демократиллĕ ирĕклĕхсем питĕ пĕчĕк пулин те, Итали халăхĕ миршĕн, вăрçа хатĕрленнине хирĕç пыракан кĕрешĕве сарса пыма çав ирĕклĕхсемпе усă куратех. Çакă вăл Америка империалисчĕсен кăмăлне каймасть. Депутатсен палатинче тухса каланă чухне Пальмиро Тольятти çакна кăтартса панă: суйлав «реформине» Вашингтонран хушнă тăрăх тунă. Тольятти реакциллĕ партисен хăшпĕр депутачĕсем: «реформăна» йышăнмалла пулчĕ, мĕншĕн тесен ĕççынни класĕсен представителĕсем влаçа илнине США тӳссе тăрайман пулĕччĕ, тесе каланине аса илтернĕ.

Вашингтон приказне хăвăртрах пурнăçлас шутпа, де Гаспери правительстви «реформа» çинчен сасăлассине правительствăна шанасси çинчен сасăлассипе çыхăнтарнă. Çапла майпа правительство «реформа» çинчен тăракан ыйту пирки иккĕленекен хăшпĕр депутатсене хĕсме шутланă.

Депутатсем — коммунистсемпе социалистсем демократие хирĕçле закон проекчĕ çинчен сасăланă çĕре хутшăнман. Вĕсем лару пулса иртекен залран «Сывă пултăр конституци!» тесе кăшкăрса тухса кайнă.

Депутатсен палати йышăннă закон проекчĕ вăй илтĕр тесен, ăна тата сенатăн çирĕплетмелле. Сенатра ку закон проекчĕ майлă тăракансем, представительсен палатинчи пек, йышлă мар.

Парламент суйлавĕ умĕн депутатсен палати демократие хирĕçле суйлав законĕ йышăнни Италири реакци вăйлă пулнине мар, вăйсăр пулнине кăтартса парать. Нумай пулмасть Италири сылтăмри партисем суйлава мажоритарнăй системăсăрах тухатчĕç. Халĕ ĕнтĕ урăхла. Халĕ çав партисем суйлав результачĕсем пирки шикленеççĕ. 1951 тата 1952 çулсенче пулса иртнĕ муниципалитет суйлавĕсем вĕсемшĕн пысăк асăрхаттару пулса тăчĕç. 1952 çулхи суйлавра христианла демократсен партийĕ, малтанхипе танлаштарсан, пĕр миллион çурă сасă сахалтарах илнĕ. Реакциллĕ партисем çĕршыва Вашингтона пăхăнтарас политика тытса пыраççĕ. Вĕсен лидерĕсем наци интересĕсене сутакансем пулнине, нацин никама пăхăнманлăхĕн ялавне аяккалла кăларса ывăтакан çынсем пулнине тăрă шыв çине кăларнă. Çавăнпа та халăх хушшинче çав партисем майлă тăракансем сахалланса пыраççĕ.

Итали халăхĕ реакци маневрĕсене хирĕç кĕрешессине вăйлатсах пырать. Рим, Генуя, Турин хулисенче тата ытти нумай хуласенче, конституцие пăхмасăр çĕршыва халăха хирĕçле реформа йышăнтарнине хирĕç протестлесе, хăватлă забастовкăсем тăваççĕ. Кĕрешĕве ялхуçалăхĕнчи рабочисемпе хресченсем те хутшăннă. Çĕршывăн мĕнпур кĕтесĕсенчен Рима делегацисем пыраççĕ. Вĕсем демократие хирĕçле закон йышăннине хирĕç хăйсен протестлени çинчен депутатсене каласа параççĕ. Итали халăхĕ демократишĕн пыракан кĕрешĕве, мире тата нацин никама пăхăнманлăхне хӳтĕлес тĕллевпе кĕрешĕве вăйлатма хăйĕн вăйĕсене мобилизацилет.

АМЕРИКА ИРАН НЕФТЬНЕ ТЫТСА ИЛЕСШĔН

Иран нефчĕ пирки Англипе Америка вăрттăн калаçусем ирттерни çинчен ют çĕршывсенчи хаçатсем халĕ те нумай çыраççĕ. Иран нефчĕ пирки ыйту 1951 çулхи çуркунне тухса тăнă. Ун чухне Иран меджлисĕ, халăх ыйтнипе, Иранри нефть промышленноçне национализацилесси çинчен, урăхла каласан, Иран нефтьне кăларас ĕçе хăйĕн аллинче тытса тăнă компание—Англипе Иранăн нефть компанийĕ текенскерне пĕтересси çинчен закон йышăннă. Пĕр-пĕр государствăра промышленноçа национализацилесси (государство аллине илесси) пирки тăракан ыйту государствăн шалти ĕçĕ пулни паллă ĕнтĕ. Апла пулин те Англи правительстви (вăл Англипе Иранăн нефть компанийĕн акцийĕсен контрольнăй пакетне тытса тăрать) çав решение законлă тесе йышăнма килĕшмен. Вăраха пыракан хирĕçӳ тухнă. Иран нефтьне тытса илме тăрăшса, США-па Англи икĕ çула яхăн вăхăт хушши Ирана хăйсен сĕнĕвĕсене йышăнтарма хăтланнă. Çав сĕнӳсем, чăннипе илсен, Иранри нефть пуянлăхĕсене Америкăпа Англин монополийĕсем хушшинче валеçессине пĕлтернĕ.

Ют çĕршывсенчи хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, 1952 çулхи декабрьте Пĕрлешӳллĕ Штатсен государство департаменчĕ Англие хирĕçĕве «йĕркелемелли» çĕнĕ план сĕннĕ. Çав план тăрăх, Англин Иранри нефть пуянлăхĕсемпе пĕр пĕччен усă курас шухăш тытма пăрахмалла. Питех те пысăк тупăш паракан çак ĕçе «пĕтĕм тĕнчери нефть синдикачĕн» аллине памалла. Синдикат составĕнче чи пысăк нефть компанийĕсем пиллĕк: Америкăран—виççĕ, Англирен—иккĕ пулмалла. Çак плана вăрттăн шухăшсăр сĕнмен. Тума палăртакан «пĕтĕм тĕнчери нефть синдикатĕнче», паллах, Америкăри нефть хуçисем пуç пулса тăраççĕ. Çапла вара, ку плана пурнăçа кĕртсен, Иран нефтьне чăннипе Америка контроллесе тăракан пулать.

Англири хаçатсем ку плана çавăн пек хакланă та ĕнтĕ. «Санди экспресс» хаçат Америка планне Англие «куç кĕретĕнех çаратни» (Ирана мар, Англие çаратни пулать иккен!) тесе ят панă. Хаçат çапла çырнă: «кӳрентерекен çак ĕç кăмăллăрах пултăр тесе, пире нефть сутас ĕçе пая кĕртме пулаççĕ. Ку пай питех те пĕчĕк пулать, унпа та эпир нумай вăхăт хушши усă кураймастпăр пулĕ». «Трус» журнал: Америка планĕ Англие уççăнах улталани пулать, тесе палăртнă.

Америка планне январь уйăхĕн пуçламăшĕнче Лондонра тĕплĕ сӳтсе явнă. Ун чухне унта США государство секретарĕн помощникĕ Байроуд пынă. Ют çĕршывсенчи хаçатсем çапла пĕлтереççĕ: Англипе Америка хушшинче калаçусем ирттернĕ хыççăн, тума палăртакан «пĕтĕм тĕнчери нефть синдикатне», Америкăпа Англи компанийĕсемсĕр пуçне, Голландипе Францири компанисене те кĕртме йышăннă. Англи çапла майпа пулас картельре Америка ытлашши пуç пулса тăрассине пĕтерме ĕмĕтленет пулмалла.

Америка планне хальхи вăхăтра Тегеранра США послĕ Гендерсон тата Иран премьер-министрĕ Мосаддык сӳтсе яваççĕ. Ют çĕршывсенчи хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, чи пысăк йывăрлăхсем Англи требовани лартнă пирки тухса тăраççĕ. Англи Ирана çакăн пек обязательство йышăнтарасшăн: ĕлĕкхи Англипе Иранăн нефть компанийĕн пурлăхне национализациленĕшĕн Иранăн çав компание чылай пысăк сумма укçа тӳлеме обязательство илмелле. Ун чухлĕ тӳлеме Иранăн вăй çитмест. Çавăнпа та Америка правительстви ăна кивçен укçа тата заем илме сĕнет. Çакăн пек «пулăшнăшăн» кайран Иранăн тӳлесе татмалла пулать. Çапла майпа Уолл-стритăн нефть монополийĕсем Иран нефтьне тытса илме кăна мар, çавăн пекех Ирана укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен парăма кĕртсе ӳкерсе ăна пăхăнтарса тăма тăрăшаççĕ. Иранра тухса тăракан «Бесуе аянде» хаçат çакна кăтартса парать: Америка планĕ вăл пысăк кавар пулса тăрать. Иран халăхĕн прависене хĕсес тĕллевпе США империалисчĕсем çав кавара хавхалантараççĕ.

САЛТАКСЕМ АМЕРИКА ÇАРĔНЧЕН МĔНШĔН ТАРАÇÇĔ

США-ри хаçатсем салтаксем Америка çарĕнчен тарни çинчен нумай çыраççĕ. Луисвилльре тухакан «Таймс» хаçат шутланă тăрăх, çартан таракансем çулталăкра вăтам шутпа 25—30 пин çын шутланаççĕ. Вашингтонри влаçсен официальнăй представителĕ—Америка çарĕн штабĕн начальникĕн помощникĕ Маколиф генерал-лейтенант та çартан таракансем йышлă пулнине йышăннă. Юнайтед Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çав генерал çапла каланă: Корейăри вăрçă пуçланнăранпа США çарĕнчен 46 пин çын тарнă.

Америка салтакĕсен мĕншĕн «патриотизм» çукки çинчен ăнлантарса пама хăтланса, Маколиф çакна палăртнă: салтаксем, ялан тенĕ пекех, вĕсене США-ран урăх çĕршыва илсе каясси çинчен пĕлтерсен тараççĕ. Генерал, паллах, тĕрĕслĕхе пĕтĕмĕшпех усса паман. Чăннипе илсен, салтаксем нумай чухне Корейăна каяссинчен хăтăлас шутпа çартан тараççĕ. Çак сăлтава Луисвилльре тухакан «Таймс» хаçат палăртать. Вашингтонра тухакан «Таймс-геральд» хаçат та çавăн пек вывод тăвать. Вăл çапла çырать: Корейăри вăрçă «американецсене нимĕн чухлĕ те хавхалантармасть», çавăнпа та салтаксем çартан тараççĕ.

Вашингтонри влаçра тăракан ушкăнсем хăйсем Корейăра пуçласа янă захватникла вăрçă вăл «оборонăллă» вăрçă пулать тесе ĕнентерме темĕнле тăрăшнă пулин те, Америка халăхне çавăн пек ĕнентерме пултарайман. Салтаксем Америка çарĕнчен йышлăн тарни çакна çирĕплетсе парать. США-н хăйсен хăрушсăрлăхне Корея территорийĕпе Китай чиккисем патĕнче хӳтĕлеме право пур тесе, салтаксене ĕнентерме хĕн. Ун çинчен Сталин юлташ 1951 çултах кăтартса панăччĕ. Салтаксем Америка çарĕнчен йышлăн тарнин сăлтавĕ вăл простой çынсем Америкăн Корейăри агрессине ытларах та ытларах кăмăлламанни пулать.

П. ФРОЛОВ.

Демократиллĕ Германи Республикинчи хуласенче пурăнмалли çуртсем лартмалли тата коммунальнăй строительство планĕсене туса хатĕрлессĕ Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партин организацийĕсем çав ĕçе активлă хутшăнаççĕ. Веймар хулинчи парторганизацисем, архитекторсемпе пĕрле, хулара çĕнĕ çуртсем лартмалли план хатĕрленĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Веймар хулинчи парти работникĕсемпе архитекторсен ушкăнĕ плана сӳтсе явать.

ЦЕНТРАЛЬБИЛЬД фотоӳкерчĕкĕ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ январĕн 24-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле иртнĕ кун хушшинче Америкăпа Англи интервенчĕсене хирĕç Чунсан районĕнче тата Иончхонрен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре çапăçнă.

Ĕнер çĕрле Америка вăрă-хурахĕсем, «В-29» йышши бомбардировщиксемпе усă курса, Пхеньянри мирлĕ халăх пурăнакан кварталсем çине каллех пырса тапăннă, темиçе çĕр бомба пăрахнă. Халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем чылай, нумай землянкăсем ишĕлнĕ.

Халăх çарĕн зенитнăй артиллерийĕ тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтакĕсем тăшманăн 5 самолетне персе ӳкернĕ. Çав самолетсем мирлĕ халăх пурăнакан хуласемпе ялсем çине бомбăсем пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ çĕре хутшăннă пулнă.

ПХЕНЬЯН, январĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем тата Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсем фронтсен уйрăм участокĕсенче Америкăпа Англи интервенчĕсене хирĕç çапăçнă.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтакĕсем паян тăшманăн 5 самолетне персе ӳкернĕ, 2 самолетне сиенленĕ. Çав самолетсем мирлĕ хуласемпе ялсем çине бомбăсем пăрахма тата пулеметсенчен пеме вĕçсе пынă пулнă.

Америка çар çыннисен тискер ĕçĕсем

ПХЕНЬЯН, январĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Нодон синмун» хаçат Пхеньян хулинчи халăх комитечĕн председателĕ Ким Сен Хак калаçа панине пичетлесе кăларнă.

Америка авиацийĕ, тенĕ Ким Сен Хак, Çурçĕр Корейăри мирлĕ халăх пурăнакан ялсемпе хуласем çине çĕрле те, кăнтăрла та пырса тапăнать. ООН-ăн çутă кăвак ялавĕне витĕнсе, Кларк генерал-палачăн сывлăшри вăрă-хурахĕсем мирлĕ çынсен çурчĕсене тата землянкисене фугасла бомбăсемпе ишĕлтереççĕ, напалмпа çунтараççĕ, шкулсене, больницăсене, ача çурчĕсене, халăх пасарĕсене пĕтереççĕ, пĕр айăпсăр хĕрарăмсене, ачасене тата ватă çынсене вĕлереççĕ. Америкăн сывлăшри вăрă-хурахĕсем уйрăмах Пхеньян çине, унта нимĕнле çар объекчĕ çук пулин те, бомбăсем нумай пăрахаççĕ.

Америка генералĕсем, тенĕ Ким Сен Хак, Пхеньян хулине тата унта пурăнакан çынсене пĕтересшĕн. Америка агрессорĕсем фронтра пысăк поражени тӳсрĕç. Вĕсем çилле шăнараймасăр Пхеньян хулине ишĕлтерсе пĕтерме хăтланаççĕ. Иртнĕ 1952 çулта Америкăн штурмовикĕсем, реактивлă истребителĕсем тата бомбардировщикĕсем Пхеньян çине тата çывăхĕнчи поселоксем çине 52.880 бомба пăрахнă, вăл шутра фугаслă, вут тивертекен, бризантнăй, напалмлă тата бактериллĕ бомбăсем пулнă. Пхеньян хулин территорийĕ 52 тăваткал километртан иртмест. Апла пулсан хулари çĕр çине кашни тăваткал километр пуçне 1.000 бомба ӳкнĕ. Пхеньян çине виççĕмĕш çул тискеррĕн бомбăсем пăрахаççĕ.

Иртнĕ çулта Пхеньян çине пырса тапăнакан Америка авиацийĕн ĕçĕнче чылай уйрăмлăхсем палăрнă. Çав уйрăмлăхсенчен Кларк генерал тата унпа пĕр каварлă çынсем Пхеньянри тата Çурçĕр Корейăри ытти хуласемпе ялсенчи мирлĕ халăха вĕлерсе пĕтерме ирсĕр план туни кӳренать. Пĕрремĕшĕнчен, иртнĕ çулта «вĕçекен крепость» йышши йывăр бомбардировщиксем тăтăшах çĕрле Пхеньян çине вĕçсе пыма тытăннă, малтанах ишĕлнĕ кварталсене пĕрин хыççăн теприне çаратнă.

Иккĕмĕш уйрăмлăх çакă пулать: «вĕçекен крепоçсемпе» усă курнипе пĕрлех, бомбоубежищĕсене тата бомбăран сыхланмалли ытти хӳтлĕхсене пĕтерме штурмовиксемпе çавăн пекех реактивлă истребительсемпе усă кураççĕ.

Виççĕмĕш уйрăмлăх вăл хула çине çĕрле пырса тапăнни пулать. Хĕрарăмсемпе ачасене нумайрах вĕлерес тесе, американецсем бомбăсене сывăракан çынсем çине пăрахаççĕ.

Америкăн Корейăри çарĕн командованийĕ тĕнчери общественноçа улталама, ООН çарĕсен авиацийĕ тĕкенекен пирĕн республикăри мирлĕ хуласемпе ялсем çине мĕнле тĕллевпе пырса тапăннине кытарма хытă тăрăшать. Кларк генерал-палач тата ăна пулăшакансем пурне те çапла ĕнентерме хăтланаççĕ: Америка самолечĕсем çар объекчĕсем çине тата тăшман çарĕ пухăнса тăракан вырăнсем çине кăна бомбăсем пăрахаççĕ пулать. Анчах та фактсем Кочжедо, Понган, Пхеньян палачĕсен, çын юнĕпе урса кайнă тискер çынсен суя сăмахĕсене тăрă шыв çине кăлараççĕ.

Америка генералĕсем мĕнле çуртсене çар объекчĕсем тесе шутлани çакăнтан лайăх курăнать. Америка самолечĕсем вăрçă вăхăтĕнче Пхеньянра 42 больница, университет, 7 институт, 75 шкул пĕтернĕ. Июлĕн 11-мĕшĕнче кăнтăрла кăна Америка штурмовикĕсемпе бомбардировщикĕсем 10-мĕш, 38-мĕш, 40-мĕш номерлĕ тата ытти чылай халăх шкулĕсене ишĕлтернĕ. 10-мĕш номерлĕ халăх шкулĕнче çав кун ачасем экзамен тытнă. Классенче тата кил хушшинче шкул ачисем, преподавательсем, ача ашшĕ-амăшĕсем пулнă. Сывлăшри вăрă-хурахсем шкул территорийĕ çине 10 бомба пăрахнă. Çав бомбăсем 6 класа, унта пулнă мĕнпур ачасене пĕтернĕ. Çав кунах темиçе больницăпа медицина пункчĕне [illegible] ишĕлтернĕ.

Юлашки икĕ çул хушшинче Америкăн сывлăшри вăрă-хурахĕсем хулари халăх пасарĕсем çине кăнтăрла 6 хутчен вĕçсе пырса тапăннă. Иртнĕ çулта кăна çавăн пек бомбăсем пăрахнă вăхăтра хĕрарăмсемпе ачасем пин çынна яхăн вилнĕ.

Пхеньянри «çар объекчĕсем» çавăн пек ĕнтĕ. Пентагон шухăшĕпе, çавсене пĕтермелле иккен.

...Америка авиацийĕ Пхеньян çине пырса тапăнни çинчен тĕрĕссипе çапла калас пулать. Америка çар çыннисем хăйсем мирлĕ Корея халăхне хирĕç, Пхеньяна хирĕç тăвакан тискер ĕççене ООН ялавĕпе витме хăтланаççĕ. ООН-ăн çутă кăвак ялавĕ пĕр айăпсăр çынсен — ачасемпе хĕрарăмсен юнĕпе, старшиксемпе карчăксен юнĕпе хĕрелнĕ. Кларк палач тата ăна пулăшакансем темле тискер ĕçсем тусан та, вĕсĕм Корея халăхне агрессорсене хирĕç кĕрешме чараймĕç. Пирĕн халăх, Пхеньянра пурăнакан паттăр çынсем çакна çирĕп шанса тăраççĕ: Корея çĕрĕ çинчи пур тискер ĕççене организацилекенсем тата çав ĕççене пурнăça кĕртекенсем халăхсен тӳрĕ судĕнчен хăтăлаймĕç. Пхеньян хулине ишĕлтернĕшĕн, пирĕн мирлĕ хулари мирлĕ çынсене пиншерĕн вĕлернĕшĕн вĕсем тивĕçлĕ ответ тытĕç.

США Корейăри агресси валли Израильре салтаксем пухать

ТЕЛЬ-АВИВ, январĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Кол гаам» хаçат çапла пĕлтерет: Иерусалимра тата Тель-Авивра «Америка ушкăнĕсем» листовкăсем сараççĕ. Çав листовкăсенче Израильри çамрăксене Корейăри агрессиллĕ вăрçа хутшăнма чĕнсе каланă.

Американецсен листовкисенче çапла çырнă: «Çамрăксем, демобилизаци йĕркипе киле таврăннă салтаксем тата ĕççĕр юлнă çынсем, кунта выçăпа вилес мар тесен, сирĕн унра пĕртен-пĕр çул пур—сирĕн коммунистсене хирĕç Корейăри вăрçа ирĕклĕн хутшăнмалла».

ТЕАТР

Çĕнĕ спектакль

Вырăсла драма театрĕн коллективĕ Я. Апушкинăн «Богатырский сказ» драмине лартса пачĕ. Пьесăра вырăс халăхĕ ют çĕршыв пусмăрçисене хирĕç паттăррăн кĕрешнине кăтартса панă. Пьесăра вырăссен юмахри пек паттăр геройĕсене Илья Муромеца, Добрыня Никитича тата Алеша Поповича сăнласа кăтартнă.

Спектакле Чăваш АССР халăх артисчĕ Е. А. Токмаков хатĕрленĕ, режиссер ассистенчĕ Н. Х. Миленкович артист, картинисене П. Т. Дмитриев тунă, музыкине Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ П. Ф. Филиппов çырса хатĕрленĕ.

Спектакльти тĕп рольсене Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕсем А. Дуняк, И. Пустовойтов, Е. Оболенская, М. Тихонова-Стасенко тата ыттисем те выляççĕ.

Спектакле куракансем театр коллективĕ паха постановка хатĕрленине палăртаççĕ.

Хушса тӳлемелли йĕркепе

ОКТЯБРЬСКИ. «Звезда» колхозра выльăх-чĕрлĕх ферминче ĕçлекенсем социализмлă ăмăртса ĕçленин итогĕсене пăхса тухрĕç. Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур енĕпе те ирттерсе тултарнă. Уйрăммăнах сысна ферминче ĕçлекенсем паха çитĕнӳ тунă. Халĕ фермăра сыснасем 490 пуç ытла. Çамрăк выльăхсене пăхса ӳстермелли тата çитĕннĕ выльăхсене пăхса усрамалли задание ирттерсе тултарнăшăн чылай колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлемелле тунă. Сăмахран, колхозри паллă свинарка Таисия Краснова иртнĕ çул 11 сысна аминчĕн 194 сысна çури пăхса ӳстернĕ. Ăна çакăншăн ултă сысна çури памалла тунă.

Ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕркепе преми илекен колхозниксем татах та пур. М. Смирнова свинарка икĕ сысна çури, М. Шоголева, А. Федорова тата А. Николаева дояркăсем кашниех пĕрер пăру илеççĕ.

В. ТРОФИМОВ.

ПЕРЕКЕТ КАССИСЕН ĂМĂРТĂВĔ

Шупашкар хулинчи перекет кассисем вкладчиксен йышне ӳстерес, ĕçе лайăхлатсах пырас тĕллевпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Халĕ иртнĕ çулти тăваттăмĕш кварталти ăмăрту итогĕсене пăхса тухнă. Çак ăмăртура хулари чылай перекет кассисем лайăх ĕçленине палăртнă.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлă заводри перекет касси вкладсен суммине ӳстермелли плана 967 процент, государствăн 3 процентлă заемĕн облигацийĕсене сутмалли задание 440 процент пурнăçланă. Совет сен çурчĕ çумĕнчи перекет касси вкладсен суммине ӳстермелли плана 936 процент, Кировски поселокри перекет касси 1.030 процент пурнăçланă.

Çак перекет кассисене «Республикăри чи лайăх перекет кассин» ятне памалла тунă, унта ĕçлекенсене укçа парса премиленĕ.

Хоккей вăййипе республикăра мала тухассишĕн

Кăçал хоккей вăййипе республикăра мала тухмалли ăмăртăва Шупашкарти «Спартак», «Динамо», «Пищевик», «Молния» тата Чапаевски поселок, Çĕмĕрлери «Красная звезда» тата «Урожай», Етĕрнери «Искра», Канашри тата Улатăрти «Локомотив» спорт обществисен командисем хутшăнаççĕ.

Январĕн 25-мĕшĕнче Çĕмĕрлере Шупашкарти спартаковецсем вырăнти «Урожай» спорт обществи командипе, Етĕрнере—вырăнти «Искра» спорт обществи командипе Чапаевски поселок хоккеисчĕсем тĕл пулса выляна. Вăйăра Чапаевски поселок команди 9:4 шутпа çĕнтернĕ. Канашра—Çĕмĕрлери «Красная звезда» тата вырăнти «Локомотив», Улатăрта Шупашкарти динамовецсем «Локомотив» спорт обществи командипе тĕл пулса выляна. Шупашкарти «Молния» спорт обществи стадионĕнче сталион хуçисем «Пищевик» спорт обществи командипе тĕл пулса вылярĕç. Вăйăра «Молния» команди çĕнтерчĕ.

Иртнĕ çулсенчи пекех, хоккей вăййипе республикăра мала тухмалли юлашки вăйăсем Шупашкарта пулаççĕ.

Пĕлтерни

Январĕн 27-мĕшĕнче, 20 сехетре, КПСС Шупашкар хула комитечĕн библиотека çуртĕнче докладчиксемпе агитаторсем валли доклад пулать. Тема: «ССР Союзĕнчи ĕççыннисен прависене сыхласси»

Докладчик — юстици министрĕ М. А. Алексеев юлташ

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ

Паян, январĕн 27-мĕшĕнче, чăвашла спектакль

«НАЗАР СТОДОЛЯ»

Ыран, январĕн 28-мĕшĕнче, чăвашла спектакль

«ЯЛТА»

ЧАСАХ! — вырăсла спектакль

«НЕВОЛЬНИЦЫ»

Спектакльсем 20 сехетре пуçланаççĕ.

Монголи халăхĕ Чойбалсана хисеплесе асăнать

УЛАН-БАТОР, январĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Çулталăк каярах, 1952 çулхи январĕн 26-мĕшĕнче, Монголи халăхĕн çулпуçĕ, Совет Союзĕн тусĕ маршал Чойбалсан вилнĕ. Монголи халăхĕ хăйĕн çулпуçне хисеплесе асăнать. Чойбалсана асăнса хисеплесе, предприятисенче, учрежденисемпе шкулсенче, ялсенче тата çар чаçĕсенче хурлăхлă митингсемпе пухусем ирттереççĕ. Монголири хаçатсем Чойбалсан çинчен пысăк статьясем пичетлеççĕ, радио передачăсем организацилет. Клубсенче, театрсенче тата хĕрлĕ кĕтессенче маршал Чойбалсанăн мухтавлă пурнăç çулне кăтартса паракан витринăсемпе фотовыставкăсем тунă. Кинотеатрсенче «Маршал Чойбалсана пытарни», «Монголи Халăх Республики 30 çул тултарни», «Монголи Халăх Республики» ятлă фильмсем кăтартаççĕ.

Монголире Чойбалсан произведенийĕсен пĕрремĕшпе иккĕмĕш томне пичетлесе кăларнă. Вĕсен тиражĕ — 20.000 экземпляр. Виççĕмĕш тома пичетлеме панă. Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕ маршал Чойбалсанăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен иллюстрациллĕ сборник кăларма хатĕрлет.

Ыран Улан-Батор хулинче Чойбалсанăн çурт-музейне уçаççĕ. Музей Монголи халăхĕн çулпуçĕ пурăннă тата ĕçленĕ çурт пулать.

ФРАНЦИ ПИСАТЕЛЬНЕ АНДРЭ СТИЛЕ СТАЛИНЛА ПРЕМИ ЛАУРЕАЧĔН ДИПЛОМНЕ ТАТА ХИСЕПЛĔ ПАЛЛИНЕ ПАНĂ

ПАРИЖ, январĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ССР Союзĕн Францири посольствинче Францири прогрессивлă писателе Андрэ Стиле Сталинла премин лауреачĕн дипломне тата хисеплĕ паллине панă. Андрэ Стиль «Первый удар» ятлă романшăн иккĕмĕш степень Сталинла премине илме тивĕçлĕ пулнă.

Андрэ Стиле дипломпа хисеплĕ паллă ССР Союзĕн Францири послĕ А. П. Павлов юлташ панă.

Андрэ Стиле чунтан-чĕререн саламласа, Павлов юлташ писателе творчествăра çĕнĕ çитĕнӳсем тума ырă сунна.

Андрэ Стиль хăйĕн ĕçне пысăка хурса хакланишĕн чĕререн тав туса, сăмах каланă.

ÇĔНĔ ПРОДУКЦИ ТУМА ВĔРЕНСЕ ÇИТЕÇÇĔ

ПЕКИН, январĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Китайри промышленность предприятийĕсем çĕнĕ йышши продукци туса кăларма вĕренсе çитеççĕ. «Женьминьжибао» хаçат Тайюаньри металлурги комбинатĕнчи рабочисемпе служащисен коллективĕ Мао Цзе-дун патне янă çырăва пичетлесе кăларнă. Çырура 0,3 миллиметр хулăмăш хурçă листа туса кăларас ĕçе ăнăçлă вĕренсе çитни çинчен пĕлтернĕ. Çакă вăл пысăк çитĕнӳ пулать.

«Гунженьжибао» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Çурçĕр-Хĕвелтухăç Китайри машинăсем тăвакан иккĕмĕш завод Аньшаньри металлурги комбиначĕ валли 5 тонна таякан, пăспа ĕçлекен мăлатук туса кăларнă.

БОЛГАРИПЕ ВЕНГРИ ХУШШИНЧЕ СУТУ-ИЛӲ ВĂЙЛАНАТЬ

СОФИЯ, январĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта Болгари Халăх Республикипе Венгри Халăх Республики хушшинче 1953 çулта таварсем улăштарасси тата тӳлевсем çинчен килĕшӳ çине алă пуснă. Килĕшӳ тăрăх 1952 çулхипе танлаштарсан икĕ çĕршыв хушшинчи суту-илӳ чылай вăйлатма палăртнă.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ 7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01241 Типография №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.